ТУКТАШ И. С. 1435

32-293

# Пĕрремĕш çĕнтерӳ



Мускав — 1932 — Самар

ТУКТАШ И. С.

# ПĔРĔМĔШ ÇĔНТЕРЎ

ОҪҪĔРК

ВĂТАМ-АТĂЛ КРАЙĔНҪИ ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
САМАР. 1932 МУСКАВ.

## ПСК(П) ТЁПКОМНЕ—
## СТАЛИН ЙУЛТАША

Вăтам-Атăл крайĕ çураки фронтĕнҫе татăклă çĕнтерӳсем турĕ. Ийунĕн 5-мĕш ҫислине çураки планне 101 % тултарнă. Сотсиалисăмлă ăмăртупа угарниҫҫĕствă урлă колхоçнĕксемпе совхосри рапоҫҫисен хастарлăхпе çĕклентерсе йанипе, нимĕнрен ытларах стелшҫинăна пурнăçа кӳртнине пула, епир 7300 пин ка акас вырăвне ийунĕн 5-мĕш ҫислине 7307 пин ка акма пултартăмăр. Ку шутран совхоссем—1066 пин ка, колхоссем—4850 пин ка, уйрăм хуçалăхсем—1391 ка акса хăварнă. Пĕтĕмĕшпе илсен 1930-мĕш çулхи çуракинҫе акма Патшалăх планĕ кăтартса панă хисепрен 1526 пин ка ытларах акнă (26,4 % аслăлатнă).

Крайком раппăртĕнҫен.

## 1. КӖРЕШУ ПУҪЛАМӐШӖ

Ваҫҫиђӣёвккӑ поҫҫолкки вӑрман варринђе. Ҫиӣелтен пӑхма пуӣан та мар, нађарах та мар—пурнаӳ хӑӣне маӣ. Нимӗнпе те мухтанма ҫук поҫҫолккӑн: килҫуртсем ӣапӑх. ҫурхи ҫилпе шултӑрканӑ, кӗрхи ҫумӑрпа шӗршӗннӗ. Мӗн пурӗ 30 хуҫалӑх ђӑвашсем пуҫӑнаҫҫӗ кунта. Поҫҫолккӑ пуҫланса кайни 6—7 ҫул кӑна ҫитет-ха. 1924-мӗш ҫулта Уҫтимӣелӗнђен уӣӑрӑлса тухса комунӑ ӣеркипе ҫӗр касса илнӗ вӗсем. Ҫӗрӗ лаӣӑх, мамӑк пек ҫемҫе хуп-хура тӑпра. Ӣӗри тавралла вӑрман. Ӣал варрипе ҫырма авкаланҫа ӣухса аваӳ. Ӑна «Вӑкӑр ҫырми» тесе ӣат панӑ. Вӑкӑр ҫырмин икӗ ӣенӗпе ҫирӗксем, хурӑнсем ӳсеҫҫӗ.

Ҫуркуннепе шыв урса каӣӗ Ҫыран хӗррине ҫитсе ҫапӑнаӳ, урлӑ хунӑ сӑвайсене ӣӑвантараӳ, шурӑ кӑпӑкне сирпӗтет. Васкаӳ ҫурхи шыв, аслӑ ҫул шыраса малалла, пысӑк тинӗселле ыткӑнаӳ...

Пурнӑҫ та ыткӑнаӳ аслӑ ҫул шыраса. Имшер поҫҫолккӑ ыӣхӑран вӑранђӗ, ҫуракине хатӗрленме тытӑнђӗ. Колхосӑн ӗҫсем ђӑвашсем калашле «кутранах ӣухаҫҫӗ». Лашасем пӗрлештермелле, вӑрлӑх хатӗрлемелле, сапансем тӳрлетмелле—вӗҫӗмсӗрех ӗҫ.

Тул ҫутӑлнӑ ҫутӑлманах шаккама тытӑнаӳ тимӗрҫӗ Умӑв. Иртен илсе касђенех хӗлхем сирпӗтет хӗпхӗрлӗ хӗрнӗ сапан тимӗрӗсенђен. Касђенех шаккаӳ тимӗрҫӗ. Ытлах тарласа ҫитсен Вӑкӑр ҫырмине анса питне ҫӑваӳ, ӑшђик типсе ҫитсен—палкаса сиксе вӗресе тухакан ҫӑл вӑлашки ҫине выртса шыв ӗҫет, тӑвӑлса ҫитнӗ ђунне уҫӑлтараӳ. Унтан каллех шаккама тытӑнаӳ. Шаккаӳ, шаккаӳ... хӗвел Уҫтимӣел хыҫне путса ҫухалиђђенех, лӑш курмасӑр.

Лӑш курмасӑрах ђупса ҫӳрет ҫӗнӗ колхос претҫетаттӗлӗ Тутиарӑв та. Ӗнер Ђаллӑпуҫне кайса устав ҫирӗплеттерсе килђӗ, паӣан лаша картӑђкисем пухса пӗтерђӗ. Пӗр сӑмахпа каласан

çуракине хатĕрленес ĕç хăйне хăйех йĕркеленсе малалла кайаť тейĕн!

Анђах сасартăк, уйар аçи çапнă пек, ђи хĕрÿллĕ ĕç вăхăтĕнђе çамрăк колхос «Краснофлоттĕса» сив ђир тытса силлет: колхос претçетаттĕлĕ Тутиарăв кĕтмен çĕртенех ђленран тухма сайавлени панă. Сăлтавĕ пĕрех: «арăм кĕмест».

Колхосра çынна вăйпа тытса тăма сук. Тутиарăв пек етемсене пушшех те ÿкĕтлеме хĕнтерех. Йалта вăл «авторитттетлă» етем. Хресђенсем хăйĕн хыççăн пынине пĕлет, çавăнпа та мĕн тума пулнă ăна тăватах вăл.

Хресђенсем ђăнахах та Тутиарăв хыççăн кайаççĕ иккен. Вăл колхосран тухма сайавлени панă хыççăнах тата çиђĕ хуçалăх сайавлени панă.

Икĕ пайа уйăрăса тăнă поççолккă. Пĕр йенђе «интуçектăр» (çапла калаççĕ уйрăм хуçалăхсене), тепĕр йенђе колхоçнĕксем. Ернерен-йĕхран акана тухса кайас тенĕ ђух çакă икĕ вăй пĕрпĕринпе кĕрешме пуçланă.

Кам кама çĕнтерĕ?

## 2. «КĂЛАРĂР МАНА КОЛХОСРАН»

Кăнтăрла тĕлĕнђе ырхан кĕсресемпе çурхи шĕлкĕш ăшшĕн ђапăлтаттарса пыратпăр Ваççиђйĕвккă йеннелле. Районран тухни иккĕмĕш кун ĕнтĕ. Икĕ кун йуланутпа çÿресе купарђасем çурăлса тухас пек ыратаççĕ. Йалта йĕнерсем çук. Лаша çурăмĕсем кусар пек çÿп-çÿхе. Пĕçĕсене йатма та çук. Пĕтĕм çанçурăм сураť.

— Тата инçе каймаллаи-ха?—ыйтрăм епĕ хама ăсатакан мушикран.

— Халĕ нумай йулмарĕ ĕнтĕ. Авă çав вăрман патĕнђен çавăрăнсан йалĕ те курăнсах лараť. Тÿрĕ кайас-тăк тватă сухрăм кăна таха...—тавăрђĕ вăл, ман çине çавăрăнса пăхмасăрах.

— Унта пĕтĕмпех ђавашсем-и?—ыйтатăп епĕ каллех.

— Ђăвашсем. Ĕлĕк нимĕçсем те пурђĕ те халĕ вĕсем саланса пĕтнĕ ĕнтĕ. Вĕсен çĕрĕсене «Канаш» совхосĕ йышăннă... Кайсан курăн унта.

Манăн ăсатаканăм ÿркенсе кăна калаçаť. «Кашни сăмахнех сутăн илет ку мушик», тесе шутлап ăшăмра. Епĕ ун çине тинкеререх пăхрăм та унăн пиђĕ çинђен çак шухăша вуласа илтĕм:

«нумай сĕтĕрĕнсе çӳреççĕ сирĕн пеккисем»... Унпала епир посçолкка ситиççен урăх пĕр сăмах та калаçмарăмăр.

— Аçта кĕмелле?—ыйтрĕ манран лавăç, посçолккă тăкăрлăкне çитсессăн.

— Йалсовет кĕнтселерне.—хуравларăм еп.

— Апла пулсан вăл шкулпа йунашар. Есĕ кунтан çуранах кай, ав çав айлăмран лашапа каçса кайма çук, шĕлкĕш мĕншĕн тесен.

Епĕ килĕшрĕм. Ут синçен анса лашана ăна патăм.

Лавăçă лашисене пĕрпĕринпе йунашар туса кăкарçĕ те кайалла уттарçĕ. Епĕ ирĕлсе ĕлкĕрмен шăпа çийĕн кăнтселер йеннелле сулăнтăм.

Вырĕскă тавраш̆ĕ çук кĕнтселер алăкĕнçе. Пуштă йешçĕкĕ çакăнса тăнипе кăна кунта пĕр пĕр уçрештени тесе шутлама пулат. Епĕ шалалла кĕрсе кайрăм.

Пысăк мар пӳлĕм. Çтенасем тавра вăрăм тенкелсем Тенкелсем çинçе пĕр-ик хресçен калаçса ларассĕ. Сĕтел пуçĕнçе шур пиншаклă çын темĕскер çырат. Претçетаттĕл пулĕ ку тесе, епĕ ун умне утса пытăм.

— Йалсовет претçетаттĕлĕ есир-и?

— Çук, вăл района кайнăççĕ ха. Алав кирлĕ-им?

— Алав мар. Мана кунта ĕçлеме йаçĕç.—епĕ хам мантатăма кăларса тыттартăм.

Мантата вуласа тухсанах йалсовет çекреттарĕн сăн-пиçĕ хĕвел пек çутăлса кайрĕ. Хăйсен йалне çăваш упполномоççĕннăй килни ăна хавасланатарни сисĕнçĕ.

— Кунта çăвашсем тăтăшах килмеç-тăр?—ыйтатăп епĕ çекреттартен, унăн шухăшне вĕçлентерес майпа.

— Ех, йулташ! Çăвашсем тетĕн-ха есĕ... Çăвашсем мар вырăссем те сайра хутра кăна кĕркелесе лав илсе тухса кайаççĕ пирĕн советран,—тавăрçĕ вăл.

— Апла иккен...

— Çапла.

***

Ман умра пĕр купа сайавлени. Тинкерсе вулатăп епĕ вĕсене, тишкĕрсе пăхатăп, пĕр-пĕринпе танлаштаратăп.

— Итле ха çекреттар. сирĕн йалта прошенисем пулман-и?

— Кунта çук, Уçтимйелĕнçе çухне пурçĕ.

— Ку сайавленисем прошениссен алли витĕр тухман-ши?— тетĕп епĕ.

— Прошениссем мар, халĕ вĕсенҫен ăслăраххисем пур теççĕ. Пурна киле курăпăр-ха.

— Çак виçĕ сайавленийе пĕр çынах çырнă ман шутăмпа.

— Тĕрĕс. Епĕ вĕсеве вунă хуг. та танлашгарса пăхнă ĕнтĕ. Анҫах кам çырнине тупасҫĕ.

— Пĕлме май çук-им вара?

— Пĕрин çине кăштах шухăшлатăп та, пĕлмех çук çав.

— Сайавлени паракансене хăйсене ҫĕнтерсе ыйтас.

— Ҫим ха,—тет çекреттар,—епир те кăшт ҫейийерех пулар. Кунта сайавлени панисенҫен пĕри кăшт тăмсаiтараххи пур. Ăна пĕртакçах хĕстерсен каласа паратех вăл. Ҫĕнтерем-и çавна?

— Тавай, ҫĕнтер,—тавăртăм епĕ, сайавленисем çинҫен кусăма сиктермесĕр.

***

Ваççиљйĕвккăри Илле Çеменҫа пĕлетĕр те пулĕ-ха есир? Ăна пурте пĕлеççĕ. Асат хуçса кăларнă ăна, курпунне кăларса аран мĕшĕлтетсе угса çўрет вăл. Алли-урисем улăм пĕрҫи пек тиnсе хăрса кайнă. Пуçĕ пысăк, пиҫĕ-куçĕ пĕркеленсе пĕтнĕ, куçĕсем хĕп-хĕрлĕ ашланса тăраççĕ. Херлĕ çурхах карса илнĕ мĕскенĕн куçĕсене.

Çак Илле Çеменҫа ҫĕнтертĕмĕр те ĕнтĕ пайан совета.

Йăпшăнса йăпшăнса, такамран хăраса ак хаљ тăрса тарас пек хĕсенсе ларҫĕ вăл алăк патĕнҫи кĕтессе.

— Мĕншĕн унта ларатăн, Иљук, ирт кунтарах.

— Сĕтел умĕнҫе епĕ мĕн тума пĕлĕп унта... Пирĕн вырăн алăк патĕнҫе,—тавăрҫĕ лешĕ ҫĕтренҫĕклĕ сассипе.

— Нуккă, Иљуш, кил-ха ман çумма. Калаçар пĕрре иксĕмĕр килленинҫен,—йăпататăп епĕ.

Илле пĕртакçах сĕтел патнелле шуçрĕ. Унтан вăл тапак хутаççине туртса кăларҫĕ те ҫĕлĕмне тултарҫĕ. Çавăнтах хупхура хутаçпа хăйĕн ашланса петнĕ йепе куçне шăлса илҫĕ.

Йалсовет çекреттарĕ, Ирсыйĕв Йулташ, тўрех хайхи сайавленисене туртса кăларҫĕ.

— Илле, çак сайавленийе есĕ çырнă-и?

— Те-ем, епĕ ăçтан пĕлем? Хута пĕлместĕп епĕ.

— А есĕ алă пуснă и?

— Колхосран тухма çыртарса панăҫҫĕ.

— Мĕн çырнăҫҫĕ-ха есĕ вăл хут çине?—ыйтрăм епĕ.
— Кам пĕлтĕр, епĕ хута ҫухлаймастăп вĕт.
— Вуласа парам-и мĕн çырнине?
— Вуламаллах пулсан вулăн çав.
Епĕ вулама тытăнтăм.

## *Челновершинскай райземодел.*

*От правлении колхоза поселки Васильевку поименовании «Краснофлотец»*

*Заявление о неригистрации колхоза*

*Как это можно посильно написать миня колхозу, ковда я не шалайу. Спросите люпово граштанина некто колхозу нидовольна. Поетому ни шалайа быть колхозом прошу не ригистровать миня а дать земля своя доля.*

Алă пуснă (паллă мар).

— Нус, йышăнатăн-и çак сăмахсене?—ыйтатăп епĕ.
— Мĕн есир мана хĕсĕрлетĕр? Епĕ нимĕн те пĕлместĕп. Кăларăр мана кулхусран.
— Илле, есĕ ан хăра, каласа пар: кам çырҫĕ сайавленине?
— Мĕн тума манран ыйгатăр?
— Кала, ан пытар. Епир пурпĕрех пĕлетпĕр кам çырнине.
— Пĕлетĕр пулсан ыйтма та кирлĕ мар вара.
— Кала, Илле! Санпала выҫама шутламастпăр епир. Каламастăн пулсан сайавленине района ăсататпăр,—хăтăрса тăкрăм епĕ сассăма хăпартса.
— Кирлех пулсан калам еппин: ăна иртсе çӳрекен çырса хăварҫĕ.
— Аха-а, апла иккен. Йепле-ха вара, иртсе çӳрекен çырса панă-ши кунта выртакан тата икĕ сайавленине те?!
— Епĕ ăçтан пĕлем ĕнтĕ...
Çапла калаçса ларнă хушăра совета çынсем нумай пухăнҫĕç.
— Петра, есĕ сайавленине кама çыртартăн?—тĕпҫет Ирсыйĕв тепĕр çамрăк аҫаран.
— Кама çыртарам вара еп, манăн хамăн аллăм çук-им? Хам çыртăм,—тавăрать лешĕ хăйуллăн.

— Нуккă çыр-ха еппин тепĕр хут пирĕн куç умĕнҫе, малтанхи пек кăларатăн-и?

— Халĕ манса та кайнă ĕнтĕ...

— Еппин малтан вуласа тух.

— Тавай.

Петра сĕтел хушшине ларҫĕ. Сайавленине вăл пилĕк-ултă хут та вуласа тухрĕ пулас. Унтан çырма тытăнҫĕ. Хуп-хура шыва ӳкрĕ шеремет çырса пĕтериҫҫен. Пĕртакçă мĕшĕлтетнĕ хыççăнах Ирсыйĕв ăна ҫарҫĕ.

— Ну çитĕ. Вуласа пар-ха ĕнтĕ мĕн çырнине.

Петра вулаҭ. Сăмаххисем çавсемех, анҫах саспаллийĕсем урăх. «З» çырмалла вырăнта «С» лараҭ, «Т» вырăнне «Д», т. ы. те.

— Ех, Петра ывăлăм! Есĕ питех те ҫас манса кăйатăнçке çырма. Пăх ĕнтĕ, мĕн туса хутăн,—тăрăхлаҭ унтан ашшĕ Лаврентти пиҫҫе.

Лаврентти вăтам хресҫен. Колхос йенне вăл тĕппипех çавăрăлнă. Малтан пĕтĕм çемйипех колхоса çырăннă пулнă вăл, анҫах Тутиарăв хыççăнах унăн арăмĕпе ывăлĕ колхосран тухса тарнă. Çапла вара пĕр хуçалăхран виçĕ хуçалăх пулса тăнă: Лаврентти пиҫҫе хăй колхосра, арăмĕ интуçектăрсемпе пĕрле, ывăлĕ Петра—ашшĕнҫен те, амăшĕнҫен те уйрăм. Тĕрĕссипе каласан пĕр хуçалăхран ик-виç хуçалăх пулни сахал мар кунта. Авă, йалсовет уполномоҫҫĕннăйĕ Елексçей та арăмĕнҫен уйăрăлсах колхоса кĕнĕ, Йăкăнат та амăшĕнҫен уйăрăлнă. «Мĕн шаҫҫи тумалла сирĕнпе? Ӳкĕте кĕместĕр пулсан йулăр çектăрпа. Пурна-киле хăвăрах çавăрăнăр-ха акă пирĕн майлă»,—шутланă вĕсем.

— Ех, Петра!—тет каллех Лаврентти пиҫҫе,—аçунтан малта пырас вухне аçу хӳринҫе çапкаланса пыратăн.

Петра ҫенмест. Те вăтаннипе, те сăмах тавăрса калама аптăранипе вăл хăмаҫ пекех хĕрелсе кайрĕ.

— Ху çырман вĕт сайавленине?—ыйтаҭ Ирсыйĕв, çине тăрсах.

Ухмахăн пĕр йурă тенĕ пек, пĕр сăмах кăна Петран та.

— Хамах çыртăм...—тет, урăх—шапаш.

Нимĕн те тĕпҫесе пĕлме пулмарĕ Петраран та, Иҫукран та. Сайавленисене Ирсыйĕв кайаллах пуçтарса илсе папкă хушшине хупса хуҫĕ...

Советран çынсем пĕрин хыççăн тепри саланҫĕç килĕсене. Анҫах Илле çаплах лараҭ тăмĕн кетсе. Сайавленине районпа йарасран хăранă курнаҭ вăл.

— Ну, Иҫуш, кайар пулӗ,—тет ҫекреттар.

Илле, Ирсыйӗв тата епӗ советран тухрӑмӑр. Пӗр хушӑ нихӑшӗ те нимӗн те ҫӗнмесӗр пытӑмӑр епир. Хӑйӗн килӗ йеннелле пӑрӑнса кайакан сукмак тӗлне ҫитсен Ир ыйӗв ҫарӑнҫӗ.

— Ну, Иҫуш, шухӑшларан-и?—ыйтрӗ вӑл.

— Мӗн шухӑшлас манӑн.

— Нимӗн те ан хӑра, Иҫуш. Сана пурпӗрех нимӗн те тӑвайас ҫук вӗсем. Кала кам ҫырнине.

— Микиш пиҫҫе, так ахалех есӗ мана хӑрататӑн. Хӑвӑрах та ҫухлатӑр пулӗ ӗнтӗ.

— Каштах шухӑшлама пӑхатпӑр та пӗрин ҫине, анҫах санран хӑвӑнтан илтес килет пирӗн.

— Есир мана лаҫакана персе ҫикмӗр-и?

— Ех, мӗн есӗ калаҫатӑн? Пӗҫек аҫасем мар вӗт.

— Каласси калап та, вара калхусран кӑларӑр мана... Сайавленине Миххайлӑв Елекҫей ҫырса пиҫӗ. Ыттисем пурте ман сайавленирен пӑхса ҫырҫӗҫ.—терӗ шӑппӑн Илле.

— Ну вот, молотес! Паҫӑрах ҫапла кирлӗҫҫӗ!—хулпуҫҫинҫен аҫашласа ҫапрӗ Микиш.

— Еппин есир ман йатӑма хуратӑр калхосран,—ыйтрӗ Илле

— Йурӗ, мӗн кирлине пӗтӗмпех тӑвӑпӑр,—тавӑрҫӗ Микиш.

Илле килнелле утрӗ, епир Микишпа иксӗмӗр ансӑр сукмакпа Вӑкӑр ҫырмине анса кайрӑмӑр.

— Кам вӑл Миххайлӑв?—ыйтрӑм епӗ Микишран, каҫӑ тӗлне ҫитсессӗн.

— Нимӗн калама та пӗлместӗп епӗ ун ҫинҫен. Хӗрлӗ ҫарта та пулҫӗ, пуйан та мар, ҫапах кулаксен йуррине йурлать. Тутиарӑвсемпе вӗсен пӗр тӗвӗ пулмалла. Ҫавна йӗрлесе тупмалла пирӗн.

— Ан пӑшӑрхан. Вӑл кайӑксем пирӗнтен ытла инҫех вӗҫсе ӳкеймӗҫ-ха. Хӑҫан та пулин лекӗҫ серепене,—тавӑртӑм епӗ.

## 3. ИНКЕСЕМ

Пахҫа... Куҫанать лӑпсӑрка пахҫа ир те, каҫ та. Йаштака пӳллӗ хурӑнсем кашни хӗвел тухмассеренех такам йатне асӑнса куҫҫуҫенеҫҫӗ.

Пахҫана пайан вӑйлӑ тӑвӑл тустарма тытӑнҫӗ. Хӗвелтухӑҫӗвҫен капланса килҫӗ те вӑл тӳрех поҫҫолькӑ тӑрӑх шӑхӑрса

ӡупма пуçларё Шурă хурăнсен çамрăк тураттисем пĕрпĕринпе хутшăнса кайрĕç, асар-писер вайпа нимĕн йĕркиçĕр çатăлтатаççĕ...

Çук, пахӡа пайан шăпах. Пахӡа мар пайан туллашаӳ виӡкĕн тăвăлпа, поççолккăри хĕрарăмсем колхос хумĕ ăшĕнӡе пăтранаççĕ. Суккăр пăвансем пек çите-çите çапанаççĕ хĕрарăмсем пĕрпĕрин çумне, нимĕн тăрлавсăр кăшкăраççĕ, çухăрашаççĕ. Такама пыртан кышласа татас пекех урса кайрĕç вĕсем.

Кĕрешӳ!

Пайан йатарласах пуçтарсаттăмăр хĕрарăмсене. Колхос çинӡен тĕплĕреххĕн каласа ăнлантарас тесеттĕмĕр. Анӡах мĕн тăвайăн-ха ĕнтĕ çак нашкал пухура? Нимĕн тăрлавсăр шавлаççĕ хĕрарăмсем, пĕринӡен пĕри хытарах кашкарас тенĕ пек карланкисене хыраççĕ. Нийепле те ӳкĕте кӳртсе лăплантараймастăп епĕ вĕсене.

Ăнланма та çук хĕрарăмсем çуйăхнине.

— Мĕншĕн пире астарса кӳртрĕç!?

— Мĕншĕн вайпа çыраççĕ!

— Хуратăр ман йата канхвусран.

— Ĕçлетӡĕр хăйсемех. Пире неӡӡĕвă хутăштарас та!

— Малтан пире ухмахсене астарса кӳртрĕç. Кайран хăйсен хӳрисене те курса йулма пулмарĕ. Тилĕсем вĕсем!

Нимĕн тума аптараса çитрĕм епĕ.—Инкесем!—пуçларăм епĕ.—Тархасшăн ан шавлăр. Никам та сире улталаса кӳртмен. Колхоса вайпа кӳртмеççĕ.

— Как кӳртмеççĕ? Апла пулсан Тутиарăвсем мĕншĕн тухса вĕçрĕç, а пире вăйпах тытаççĕ. Мĕншен пире улталарĕç?

— Улталаканшăн епир айăпла мар. Ăна хăвăр пĕлнĕ пек айăплăр.

— Е-е-е, есир айăплă мар-и?

— Апла пулсан атвит та çук пуӡ сирĕн?

— Есир хӳгелегĕр вĕсене!

— Намас арсем!

— Намаса сутса ĕçсе йаратăр!

Пĕр инки маларах сиксе тухрĕ те çине çинех мана ӡышкипеле хăмсарса кăшкарма тытанӡĕ.

— Инке, ытлашши ан кăшкар.

— Мĕншĕн кашкарас мар?

— Ĕлĕк те нумай ӡелхене çыртса пурăннă!

— Халӗ хӗрарӑм та арҫынпа пӗр танах.

— Равноправи!!

— Саккун сире равноправи кӑшкӑрма мар панӑ, арҫынсемпе пӗр тан тӑрса ӗҫлеме,—савӑлласа хуратӑп епӗ хамӑн сӑмахӑма.

— Саккун саппун айӗнђе!

— Сурмастпӑр та епир саккун ҫине.

Ман ҫанҫурӑм тӑрӑх темӗн сӑрхӑлтатса кайрӗ.

— Инкесем!—гетӗп епӗ,—ђӗлхӗрсем кӗҫӗтмеҫҫӗ пулсан саккун ҫинђен асӑрхарах калаҫӑр.

Манӑн сӑмахӑмсем хӗрарӑмсене пушђех вӗрилентерсе йаџӗҫ. Ман умра пуринђен те хытӑрах кӑшкӑракан хӗрарӑм сӗтел умнех вӑрхӑнса тухрӗ:

— Акӑ, йулташ, кур! Акӑ вӑл—камӑн ђӗлхе кӗҫӗтет—кӑшкӑрса йаџӗ вӑл ђун хӑвалӗпе.—Манӑн ђӗлхем кӗҫӗтет, хыҫса йар тархасшӑн!

Епӗ ун ҫине пӑхас мар тесе пуҫа ҫӗрелле усрӑм.

— Ну мӗн? Хал ҫитеймест-им? Мӗншӗн хыҫмастӑн? Хыҫ! Ых, намассӑр! Ӑфу, ӑфу сана!

Манӑн питӗм ҫине ҫӑра сурђӑксем лаџлатса ӳкме пуҫларӗҫ. Епӗ питӗме хӑвӑртрах тушуркка ҫаннипе хупларӑм...

Нумайђђен нимӗн тӑрлавсӗр шавланӑ хыҫҫӑн хӗрарӑмсем пӗртакҫах лӑпланђӗҫ. Епӗ сассӑма йӑвашлантартӑм.

— Йатлаҫрӑмӑр, тӑрӑхларӑмӑр пӗрпӗрине, халӗ ырӑ сӑмахпа калаҫса пӑхар, инкесем. Епӗ сирӗн тӑшманӑр мар, есир те мана нимӗн те туман. Мӗншӗн штык ҫине тирмелле-ха ҫынна?

— Ђун ђӑтмасӑ,—теҫҫӗ хӗрарӑмсем.

— Йатлаҫнипе те лӑпланас ҫук ӗнтӗ.

— Ан тарӑхтарђђӑр пире.

— Тарӑхтарма мар, ђӗререн калаҫма пухӑннӑ епир.

— Калаҫма никам та ђармасӑ. Калаҫӑр, анђах вӑйпах колхос пулмастпӑр епир,—тавӑраҫҫӗ хӗрарӑмсем.

Ку пухура нимӗн те тума пулмарӗ хӗрарӑмсемпе. Ҫаплипех ирӗлсе кайрӗ вӗсен ҫилли.

* * *

Каҫхине епӗ Пиктулӑв Йакур патне калаҫса ларма кӗтӗм. Сӑмахран сӑмах колхос ҫинђен пуҫласа йатӑмӑр.

— Епӗ ҫирӗп шухӑшлӑ. Ҫурхи ҫил мана ниҫталла та пӑр-

калантарийас çук. Тума шутланă—тăватпăр,—тет Йакур пиҫҫе, ҫакăр кусĕсене выҫаткаласа.

— Сахалтарах çав сан пек шухăшлакансем. Сан пек активиссем ытларах пулсан нипоҫҫом çĕмĕрсе тăкнă пуҫăттăмăр ҫăрмавсен хӳмине,—тавăратăп епĕ.

— Хĕрарăмсене лайăхрах саваласа йакатмалла, вара ĕç кайаҭ.

— Тĕне кӳртрĕç-ха пайан мана хĕрарăмсем.

— Вĕсем çапла. Малтан хирĕç сикеççĕ, ыран—сан майлă. Мелне пĕлес пулаҭ вĕ емпе ĕçлеме.

Тултан Йакур арăмĕ, Таҭук инке, пĕр çĕклем вутă йатса кĕҫĕ.

— Сторовă, кăмиссар!—тăрăхларĕ вăл мана кĕнĕ кĕменех. Епĕ самантрах уйăрса илтĕм Таҭука. Пухура питрен сураканни иккен...

— Маттур, Йакур пиҫҫе, санăн матку. Ҫупой твухстволккăран иртерет. Лайăх тĕне кӳртрĕ пайан мана...—тетĕп епĕ ытарлăраххăн.

— Есĕ мĕн, Таҭук, ухмахланатăн? Хĕрарăмсене пĕр тĕвве пĕрлештерес ҫух ху пăтратса çӳретĕн-и?—пӳлҫĕ Йакур пиҫҫе арамне.

— Ҫун ҫăтмаст. Тутиарăв аркатса йаҫĕ колхоса—нимĕн те тумаççĕ. Камран килет вăл? Çак сăран пиншаксенҫен пулмасăр камран килтĕр?—Таҭук инке кусĕпе ман çине тĕллерĕ.

— Таҭук инке,васкамасăр тăвас пулаҭ ку ĕçе. Васканă—туйĕнҫе пăсарнă, теççĕ ваттисем.

— Нимĕн те йăраланса тăмалли çук вăл кулак шăхлиҫисемпе. Тăвас тăк тăвас—пултăр йалĕпех колхос.

— Тĕрĕс калатăн. Пурин те пĕр шухăшлă пулас пулаҭ,—асăрхаттараҭ арăмне Йакур пиҫҫе.

— Нимĕнрен ытларах хĕрарăмсене лайăхрах саваласа йакатмалла,—хушса хуратăп епĕ.

— Хĕрарăмсене ҫупă тва. Вĕсене пайан тесен пайанах ҫутласа çитерме пулаҭ,—тавăраҭ Таҭук инке.

— Акă мĕн, Таҭук: пулаҭ тăк пултăр, çын мăшкăлĕ айне йулас мар. Сава хĕрарăмсем итлеççĕ. Ҫеçĕр пух та хамăр пата кама пухмаллине, саваласа йакат вĕсен ҫĕлхи çăварĕсене. Ыран правлени суйлавĕ. Пурте пухăва пырса Тутиарăвсене пойккот памалла.

— Мĕн, тăваймĕç тетĕн-им? Тытăнсан çĕре тепĕр майлă çаврса лартăпăр епир.

— Çапла кирлĕ çав, инке,—хаваслантаратăп епĕ.

— Тытăнатăп—тăватăп,—ответлерĕ Таŭук инке татăклăн.

## 4. ШАВЛĂ ПУХУ

Пайанхи пухура çуракине хатĕрлевесси çинҫен токлат лараŭ. Токлатҫĕксем çук пирки каллех хамăннах каласмалла пулҫĕ. Хресҫенсене йăлăхтарса çитернĕ ĕнтĕ колхос çинҫен каласисем. Пайан каллех акă колхос çинҫенех калаçатăп.

Никам та нимен те ыйтса пĕлесшĕн мар токлат пĕтнĕ хыççăн. Хресҫенсем шăпăрт сăмахсăр. Питех те тарăхас килет вара никам та калаçакан пулмасан. «Хирĕç те пулин калаçҫăрҫҫĕ хуŭ», тесе шутлатăп,— «лăплантарăттăм».

Никам та калаçма шутламаннинне кура ура çине сиксе тăтăм.

— Ну, ну, йулташсем, мĕн нимĕн те ҫĕнместĕр? Тавай калаçăр. Çаварсене вакапа хирсе уçмалла мар пулĕ. Мĕн калаçасси пайан ыран кăна йулҫĕ, малашне акана тухас тейĕпĕр. Çапла. Тавайăр калаçăр, ыйтса пĕлĕр кам мĕн ăнланайманнине.

— Мĕн ыйтса пĕлесси пур, пурне те ăнланнă ĕнтĕ,—тавăраççĕ мушиксем.

— Ăнланнă пулсан колхоса кĕрес пулаŭ.

— Епир проттĕв мар, арăмсем кĕмеççĕ... — Илтĕнеççĕ сасăсем.

Алăк патĕнҫен Лаврентти пиҫҫе арăмĕ хĕсĕнкелесе тухрĕ сĕтел умне.

— Тавай-ха епĕ ухмах пуçăмпа пĕр виç сăмах калаçам,— пуçларĕ вăл.—Никама та улталаймăр хĕрарăмсем çине йăвантарса. «Утне тивмен—туртине» тенĕ халап кăна вăл сирĕн. Арăм нихăçан та мăшăртан йулни çук. Епĕ калхусран хураттарнăҫҫĕ, халĕ каллех кĕретĕп. Кулак шăхлиҫисене итлесе хамăн упăшкамран уйăрăлса пулмĕ... Çыр, Микиш, мана кайаллах! Колхоçнĕксем шапăлтаттарса алă çупса йаҫĕç çак сăмахсем хыççăн.

— Тĕрĕс, хĕрарăмсем! Кулак шăхлиҫипе ташламалла мар пирĕн!—Йанраŭ тĕпел кукриҫнен Таŭук инке сасси.

Хавасланнипе епĕ хам сисмен хушăрах йаштах ура çине сиксе тăтăм.

— Ех, йолкки-палкки! Ку хĕрарăмсемпе епир пайанах сотсиалисăм туса хурăпăр. Савăнăç кана! Пирĕн пурин те çаксенџен пример илмелле. Пире кулаксем илĕртеççĕ, анџах пирĕн йыша вĕсем аркатайас çук. Епир вăйлă!

Пирĕн вăй пĕрлешӳре.

Манăн кăмăлăм хавасланнипе таçта çитех çĕкленсе кайрĕ. Савăннипе калама сăмах та тупаймастăп.

Пуху умне Елекçей-патрак вархăнса тухрĕ. Сăмах калама çăвар уçиџџенех хăремесленсе кайнă вăл, џышкисене џăмăртанă.

— Çитĕ, йулташсем, кулаксемпе поткулаџниксен пăттине пĕçермешкĕн. Ĕлĕк те нумай ташланă вĕсен шăхлиџипе. Епĕ хам мĕн џухлĕ пурăнтăм Арçук патĕнџе тарçăра? Мĕн џухлĕ тар йухтартăм? Хăйсен вăйĕпе пуйрĕç-и вăл пуйансем?! Пĕлетпĕр кам вăйĕпе пуйнине. Халĕ ăçталла туртнине те пĕлетпĕр. Пуйансем халăха пăтратса пурăнаççĕ, а епир вĕсене суйлав правинџен те лишиŤ туман-ха. Халех кутран тапса сирпĕтмелле вăл харам-пыра!

— Толой кулаксене!

— Толой унăн йыттисене!

— Пойккот!

Тĕпелтен çинçе сасă йанраса кайрĕ.

— Епир колхос тума пулнă и тăватпăр. Кулак шăхлиџисем пире ан џăрмантарнă пулџџăр, пурпĕрех тытса џарайас çук. Тутиарăв йурийех колхоса пăџлантарса лартма тăрăшрĕ. Пойккот ăна, йиџџи вашшу так!

— Пойккот! — Çухăрма пуçларĕç хĕрарăмсем.

— Тавар памастпăр!

— Çĕртен кăларатпăр!

— Йалтан хăваласа кăларса йамалла вăл йĕке-хӳресене!

Хĕрарăмсем нумай тăрларĕç пухура. Проттоккол çине çапла çырса хуџĕç:

«Тутиарăв Иџйана колхоса йури салатса йама тăрăшнăшăн пойккот паратпăр».

---

Колхоçнĕксен пухăвĕ нумайа тăсăлмарĕ. Çĕнĕ правлени суйларăмăр. Колхос претçетаттĕлне Çеменăв Левенттейа турăмăр. Џлекĕсем—Купсовпа Ирсыйĕв.

Çак пухурах колхоçнĕксене уйрăм прикатăсене пайласа, прика-

тирсем палăртса хутăмăр. Апрелĕн 24-мĕшĕнҫе ҫуракине тухма йышăнтăмăр.

Пайанхи кунҫҫен ку йалта епĕ кулак тупайманҫҫĕ. Пайанхи пуху манăн куçăмсене уçрĕ. Арçентти Çеменҫ ёлĕк хупах та тытнă, тарçăсем те усранă иккен. Анҫах мĕншĕн-ха ăна лишшиĭ тумасăр хăварнă?

Епĕ йалсовет претçетаттĕлĕ Купсов çине сиввĕн çавăрăнса пăхрам.

— Кулака хўтĕлесе пурăнатăн снаҫҫĕт?

— Вăл, снаш, ушипкă пулнă. Перевыпăр вăхăтĕнҫе ҫухăнсемпе вăтамсем хытă хўтĕлерĕç ăна. Пеҫҫен нимĕн те тума пулмарĕ...

— Смотри, тусăм, кулак сĕрекине лекмелле ан пултăр санăн, —тавăртăм епĕ çав тонпах.

## 5. ÇУРÇЁР ИРТСЕН...

Поççолккăна сивĕ тĕтре хупласа илҫĕ. Хирсем тăрăх нўрĕ çĕр шăрши йавăнаĭ. Ырхан кĕсре пек йуртаĭ поççолккă çийĕн шупка уйăх.

Кун каçипех пăҫă нўлĕмре ларса анкăминкĕленнĕ пуçа уçăлтарма епĕ урама тухрăм. Поççолккă шăп. Тарăн ыйха путнă поççолккă. Пĕр манăн кăна ыйхăм çук. Кăкăрăм çурăлса кайас пек тарăнăн сывласа тăвалла утатăп.

Поççолккăн ту вĕçĕнҫе çирĕк йывăççисем çине шупка çутă ўкнĕ. Пĕр пўртрен мăкăртатса калаçнă сасăсем тўлек сывлăша çурса тухаççĕ урамалла.

Мĕн тăваççĕ-ши ку пўртре?

Вăрахăн йапшăнса ҫўреҫе умне пырса тăтăм епĕ, итлеме тытăнтăм.

— Тутиарăв тус! Мĕншĕн пуçа усрăн? Кĕрешў вĕçне çитиҫҫен тумхахсем нумай-ха. Турă пулăшсан такăнĕç, Микишсем те такăнĕç. Е-е-й, пыла не пыла...—урмăшса тухаĭ сасă.

Камсем иккенне паллас тесе ҫĕрне тăрне тăрса кармашса пăхатăп. Нимĕн те уйăрса илме çук, ҫўреҫене карса хунă шурă пусма витĕр çын мĕлкисем мĕшĕлтетнисем кăна палăраççĕ. Пĕҫĕк сĕтел тавра ларса тухнă вĕсем. Сĕтел çинҫе—ҫетвĕрт. «Ёçеççĕ... Кавар тăваççĕ...»—амаланҫĕ шухăш манăн пуçăмра.

— Вот што, тăвансем,—цўлет тăкăскă сасă ыгти сассене,—

иумай пакӑлтатни усӑсӑр. Ниmӗнрен малтан шӑплӑх кирлӗ. Уй кусӑ, вӑрман хӑлхаллӑ.

— Пӗри тухса тӑрӑр пӳртум алӑкне. Çын килнине курсан систерӗр,—илтӗнет Тутиарӑв сасси.

— Çапла... асӑрхаса тӑвас пулать ку ӗçе. Никам та ан систӗр.

Ђерккесем кайаллах ђанклатаççӗ. Кайаллах урмӑш сасӑсем урамалла хумханса тухаççӗ.

— Пирӗн катаранах сыхӑ тӑмалла, тӑвансем. Колхос пирӗн куç умӗнђех çирӗпленсе пырать. Уйрӑм хуçалӑхсем те суланђӗç вӗсем йенне. Хаçатсем тӑрӑх—кӑçал уйрӑм хуçалӑхсене те вуншар килпе пӗрле актармалла тени сисӗнет. Апла пулсассӑн пирӗн поççолккӑ пӗтӗмӗшпех колхосланасси курӑнсах тӑрать. Теççатйитворккӑсене мӗн пулсан та йышӑнмалла мар. Унсӑрӑн—пӗтетпӗр.

— Ех, пыла ни пыла!—кӑшкӑрать тахӑшӗ,—што нам тиççиттитворккӑ... пире пултӑр ђерккке пултӑр...

Хӗрӳллӗнех акиттатсилекенни кам иккенне пӗлес тесе епӗ тата ытларах кармашма пуçларӑм. Анђах ман ура айӗнђи пӗрене пукан хӗмсӗрт-хемсӗрт! туса йӑванса кайрӗ. Епӗ шӑннӑ çӗр çине персе ӳкрӗм. Шӑлт-шалт алӑк сасси шалтлатрӗ, урама Тутиарӑв вӑрхӑнса тухрӗ.

— Мӗн шӑршласа çӳретӗр çын ђӳређи умӗнђе? Мӗн кирлӗ сана?!—кӑшкӑрса йађӗ вӑл. Епӗ унӑн умне пырса тӑтӑм.

— А-а-а, уполномођђӗннӑй йулташ иккен! ниçвиђайуç, тавариш. Епӗ хуликансем çӳреççӗ тесе. Айта, кӗр пӳрте.

— Епӗ ӗçместӗп!—тавӑртӑм сиввӗн.

— Не опесаттӗђнӑ ӗçме. Калаçса ларӑпӑр. Кунта никам та ытлашши çын çук, пурте хамӑрӑн.

— Хӑвӑр çынӑрсемпе хӑвӑрах ӗçсе-çийӗр.

— Упполномођђӗннӑй йулташ! Ђестнай словӑ епӗ колхоса хирӗç мар. Тупа та турӑшӑн та хирӗç мар. Арӑм кӑна манӑн ӗçе пӑсса тӑраканни.

— Ну латнӑ. Урӑх ан калаç. Кӗр пӳрте, хӑнусем кӗтеççӗ пулӗ,—сӑмаххӑма касса татрӑм епӗ.

— Çеменӑв йулташ! Епӗ нихӑçан та проттӗв пулман. Пайан та епӗ сирӗнпе пӗрлех. Тытӑнсан—ыранах поççолккипех колхоса кӳртсе йаратӑп.

— Пӗлетпӗр санӑн йурруна. Сывӑ пул!—терӗм те епӗ, хыттӑн утса анаталла анса кайрӑм.

Автансем шарӑлтаттарса авӑтаççӗ.

Мал йенҫен шурӑмпуҫ ҫути йарапаланса хӑпарҫӗ.
Поҫҫолкка шӑп.
Нимӗн сосҫӗвӗ те ҫук поҫҫолккӑра...

## 6. ТӐРЛАВСӐР СЫПӐК

Райӗҫтӑвкомран отношени килнӗ: икӗ ерне хушшинҫе йалсовеҫӗн ӗҫӗсене тӗрӗслесе тухмалла. Ку хута ҫырнӑ хыҫҫӑн пӗр ерне иртсен тин илтӗмӗр епир. Ҫавӑнпа та йалсовет ӗҫӗсене тӗрӗслеме йатарласах кампании уҫма май пулмарӗ—вӑхӑт ҫук, ик-виҫ кунтанах акана тухмалла.

Ӗҫе вӑраха йамасӑр тӑвас шутпа пленӑм пухрӑмӑр. Пленӑма колхоҫнӗксем те уйрӑм хуҫалӑхсем те пухӑнҫӗҫ. Кун пек пысӑк пленӑм Ваҫҫиҫийӗвккӑра халиҫҫен те пулман-тӑр.

— Вот што, йулташсем,—пуҫларӑм епӗ хамӑн токлатӑма,— кун пек мӗшӗлтетсе ӗслесен епир нумайах малалла кайаймӑпӑр. Епир пурнӑҫ хӑвӑртлӑхӗсенҫен кайа йулса пыратпӑр. Йалсовеҫӗ пирӗн поҫшевикла кӗрешӳпе ҫителӗклӗ йертсе пыраймасӗ. Халех йалсовеҫӗн ӗҫӗсене тӗрӗслесе тухса унӑн ҫирлӗ вырӑнӗсене сыватма тытӑнмалла.

— Ҫӑвахах та ҫапла, Ҫеменӑв йулташ,—тет Елекҫей-патрак,—пирӗн йалсовеҫӗ массӑпа таҫӑ ҫыхӑнса ӗҫлесе пыраймасӗ. Колхос ҫинҫен ҫителӗклӗ ӑнлантарса парайманни пуриншӗн те паллӑ. Хӗрарӑмсемпе пӗр пуху та туман...

Елекҫей хыҫҫӑн йалти уҫҫитлӗ тухрӗ. Йалсоветне вӑл тӑтӑшах килкелесе лараӗҫӗ, анҫах хӗрӳллӗнех хутшӑнса ӗҫленине курман епӗ ӑна. Ҫапах та йалсовеҫӗн йапӑх вырӑнӗсене кураӗ вӑл, мӗнле майпа ҫиртен сывалмаллине те ҫухлаӗ.

— Йалсоветне суйласа лартнӑ етемсен ҫӗрӗ ҫунлӑ пулмалла,—тет вӑл,—пайанхи тапхӑрӑн ӳпкипе сывламалла. Тӑмран ҫӑрса тунӑ рапотнӗксем кирлӗ мар пире. Йалсовеҫӗ пирӗн пурнӑҫа аванлатассишӗн нимӗн ҫухлӗ те тӑрӑшман. Пире хамӑра та ӗҫе хутшӑнтарасси ҫинҫен шутламан та вӗсем. Кӑнтселере килсен Купсов пире мӗнле те пулин ответлӑрах ӗҫ хушас вырӑнне йаланах проттокколсем ҫыртарса ӑнран йараӗ. Маиашне пӗр тӗвӗ пултӑр йалсовеҫӗпе уҫҫиттӗлсен хушшинҫе.

Ҫынна йатламашкӑн, йе унӑн айӑпне кӑтартса памашкӑн вӑл ытлашши йӑвӑр ӗҫех мар. Анҫах хӑвӑн айӑпна хыпашласа тупса ун ҫинҫен пӗтӗм халӑх кусӗ умӗнҫе каласа пама аплах

мар вара. Пайанхи пленăмра та акă совета нумай йатлаççĕ. Совет ђленĕсем хайсемех тухса сăмахсем сирпĕтеççĕ. Анђах вăл сăмахсем хăйсем çинех тийеннине вĕсем сисмеççĕ, туйасшăн та мар.

Йалсовет çекреттарне Ирсыйĕв йулташах илер-ха. Вăл совстра икĕ çул ĕçлет. Йалсоветђĕн çитменлĕхĕсене вăл пуринђен те аванрах курса тăнă. Анђах вăл çитменлĕхсене сирсе йарас майпа мĕн тунă-ши хăй? Ман шутăмпа нимĕнех те туман. А калаçас йенђен Ирсыйĕв та ыттисенђен йулмасть, ђĕлхе-çăварпа никам та ăна çитес çук тесен те ытлашши пулмĕ. Авă йепле пăсăрлантарать вăл совета:

— Епĕ советра иккĕмĕш çул ĕçлетĕп, а пирĕн совет колхос çинђен пĕрре те тĕплĕн ăнлантарман. Хамăр мĕн пур сăлтава кулаксем çине тийентересшĕн. Кулакĕсем совет çунатти айĕнђех хĕртĕнсе пурăнаççĕ иккен-ха. Ăçтан колхоса кĕђђĕр хресђенсем, ковта совет хăй кулака уйăрса илме пултараймасть? Колхос йухăмĕ ÿсменшĕн кулаксем кăна мар совет хăй та айăплă.

— Апла пулсан есĕ те айăплă снађђĕт,—пÿлтĕм епĕ.

— Епĕ хăть мĕнле май, епĕ преçитиумра та тăмастăп...—тавăрђĕ Ирсыйĕв.

Айăплă çын пек пуçне усса ларать прет.

— Йулташсем!—тет вăл,—мана халĕ есир мĕнле пĕлнĕ çапла айăплама пултаратăр. Анђах епĕ нимĕнпе те айăплă мар. Районăçтăвком хушнисене тума тăрăшнă. Колхос çинђен ăнлантарса паман мар, темиçе рас та токлат лартнă. Хресђенсем колхоса кĕмеççĕ пулсан манăн вĕсене вăйпах хăваласа кÿртмелли çук, снаш... Ĕçлеме пултараймастăп пулсан кăларăр, ÿпкевĕм çук ман сирĕн çине...

— Ĕç çине ун пек çийелтен пăхма йурамасть, Купсов. Йалсоветђĕн колхос йухăмĕн пуçне тăрса, вăл йухăма хăватлăн çĕклентерсе йамалла пулнă. Çакăнпа кăна виçетпĕр епир хађхи вăхăтра йалсоветђĕсен ĕçĕсене,—ăнлантарса патăм епĕ.

— Мĕн пĕлнĕ таран ĕçленĕ епĕ. Пулăшу çителĕклĕ пулман. Районăçтăвком çырнисене пурнăçа кÿртме мар вуласа та ĕлкĕрсе пыраймастпăр епир. Айăплă... хамах пĕлетĕп...

Пленăмра советăн ĕçĕсене тĕпренех тишкĕрсе тухрăмăр. Çителĕклех хускану пађĕ вара пайанхи пленăм. Ыйхăллă йалсоветне вăратрĕ, пĕсехерен тытса силлерĕ, йепле ĕçлемеллине кăтартса пађĕ.

Йалсовет ҫленĕсен ĕҫĕсене те кашниннех уйрăмăн тĕрĕслесе тухрăмăр. Колхоc йухăмне ҫĕклентерессишĕн тăрăшман, ăна ҫăрмантарса кăна пынă ҫленсене йалсоветĕнҫен кăларса вĕсем вырăнне урăххисене—колхоҫнĕксемпе ҫухăнсене кўртрĕмĕр. Йулашки ыйтупа—поҫҫолккăри кулака Арҫентти Ҫеменăва суйлав правинҫен лишшиĕ туса, интивитуаҫнăй налок хума йышăнтăмăр.

Пленăм кун йĕркинҫи ыйтусене сўтсе-йавса пĕтерсенех йал халăх пухăвĕ уҫăлҫĕ. Епĕ хресҫенсене теҫҫаĕтитворккă ҫинҫен каласа ăнлантарма тытăнтăм.

— Совет влаҫĕ уйрăм хресҫенсене те манса хăвармасĕ.: Поҫшевикла иккĕмĕш ҫуракине иртерме епир уйрăм хуҫалăхсене те пулăшатпăр. Ĕҫ ўсĕмлĕрех пытăр тесен пирĕн ушкăнсемпе пĕрлешсе ĕҫлемелле. Ҫавăнпа парттин крайри комиттеҫĕ уйрăм хуҫалăхсене ҫураки иртерме вуншар килĕн ушкăнланма хушаĕ.

— Кайаллах колхоса хăвалаттăр!—илтĕнҫĕ сасă.

— Ҫук, йулташсем, колхос йĕрки мар ку. Йулташланса ĕҫлени кăна. Сирĕн тырпулăрсем хăвăрах йулаҫҫĕ...

— А мĕншĕн пилĕкшер килпе пĕрлешмелле мар?

— Йаснă колхосалла туртаҫҫĕ.

— Кирлĕ мар пире ку йĕрке!

— Колхос йĕрки кирлĕ мар!

— Пирĕн патра кăна шухăшласа кăлараҫҫĕ вăл йĕркене.

— Мĕншĕн Уҫтимйелĕнҫе нимĕнле «творккă» та ҫук?

— Йышăнмастпăр!

— Ни шала-ам!

Епĕ райĕҫтăвкомран килнĕ отношшенийе туртса кăлартăм.

— Краштăнсем! Ĕненместĕр пулсан мейĕр хăвăр вуласа пăхăр поҫҫевтройккă тирективне.

— Вула, Тутиарăв!

— Вуласа пар, мĕн ҫырнă,—йанраĕ сасă.

Тутиарăв ҫĕрĕп пек хутланса кĕрсе сĕтел умне тухса тăҫĕ. Райĕҫтăвкомран килнĕ хута нумайҫҫен йенҫен-йенне ҫавăркаласа пăхса тăҫĕ вăл. Йулашкинҫен шĕвĕр пўрнине ҫўлелле ҫĕклерĕ:

— Кипиткă!—терĕ вăл,—ку хута нийепле те ăнланма ҫук. Ĕўĕтуруруk ҫырнă кăна. Пиҫетне те пусман. Ĕненме пулгараймастпăр ку хута, краштăнсем.

Ман ҫанҫурăм тăрăх темĕскер кăткă ҫупнă пек сăрхăлтатса

кайрĕ. Çак самантра епĕ Тутиарăва çав вырăнтах пăвса пăра хас патне çитрĕм. Анђах хама хам астуса çиллĕме лăплантартăм епĕ.

— Апла пулсан хăвăр кайса ыйтса пĕлĕр райĕçтăвкома. Унсăрăн сире тивĕçлĕ çĕре йăрансем кастарма пултараймастăп епĕ.

Çук, нимĕнпе те тытса ђарма çук иккен уйрăм хуçалăхсене. Çуркуннепе татса кайнă арман пĕвинђи шыв пекех кĕрлеме тытăнђĕç вĕсем.

— Йепле ђарма пултаратăр?!

— Ђарма пултараймастăр!

— Çĕр халăхăн!..

— Халăх мĕн тăвас тенĕ çавă пулаť.

— Халĕ хамăр хуçа...

— Çынсем суха тăваççĕ, а есир пĕрпĕриппе туллаштаратăр хресђенсене.

— Вăхăт иртсен акма та кирлĕ мар.

— Акмастпăр!

— Кипиткă!..

— Колхоссем савăнђђăр.

Ирсыйĕв ђышкисем çӳлелле çĕкленђĕç.

— В ђом шĕ телă, йулташсем? Суйлăр упполномођђĕннăйсем. Хăвăр калаçса татăлăр районри влаçпа. Епир ку ĕçпе хамăра çыхлантармастпăр.

— Кипиткă! Тавай упполномођђĕннăйсем суйлас!—Ђĕтренсе кайрĕ Тутиарăв сасси.—Пурпĕрех вĕсен суйине кăларатпăр.

— Суйлас тăк суйлăпăр.

— Аťа вĕçтер, Илјук, хăвах.

— Илментейпе иксĕр кайса килĕр!

— Епĕ проттĕв мар,—тавăраť Тутиарăв.

Пĕр сасăпах суйларĕç Тутиарăвпа Илментейа райĕçтăвкома каймашкăн. Советран вĕсене хут çырса патăмăр.

„*Единоличники поселка Васильевки десятидворную систему не пр*[illegible]*нимают. А поэтому постановили уполномочивать граждан Тудиярова Ил. и Тумандеева Илмендея в р*[illegible]*полком, для перег*[illegible]*воров об отмене десятидворо*[illegible]",—тесе çырнăђђĕ вăл ӳкерђĕкре.

Иђукпа Илментей çав касхинех йуланутсемпе вĕçтерђĕç Ђаллăпус райĕçтăвкомне.

Çак каç мана çĕрĕ-çĕрĕпех йăвăр шухăшсем канлĕх памарĕç. «Колхос активĕ çирĕпех мар. Ђухăнсене колхос тавра кирлĕ таран ђăмăртаймарăмăр Тăшмансем вăхăтлăха пирĕнтен вăйлăрах. Тăшманăн вăйĕ—ђухăнсемпе вăтамсене хăйсем майлă çавăрма пĕлнинђе...»

Çунса пĕтмен пирус тĕтĕмĕ пек ункăлана-ункăлана йавăнаççĕ шухăшсем. Вĕçлĕнсе çитеймесĕрех ирĕлсе пыраççĕ вĕсем. Мĕн тумалла малашне? Мĕн пулсассăн та пуçа усма кирлĕ мар. Йавăрлăхсем умĕнђе пуçа тайса тăрас-тăк пођшевиксем те мар вара епир!

## 7. КАМ ÇЫРНĂ КУ ХУТА?

Кăнтăрла тĕлĕнђе Иђукпа Илментей райĕçтăвкомран тавăрăнђĕç. Питех те пысăк ĕç тутарнă вĕсем районра. Райçĕрпайĕнђен калама та çук хăватлă хут илсе килнĕ.

*«Землю, принадлежащую единоличникам, срочно распределить среди граждан, наделяя им едочные нормы.*

Ђаплăн утса кĕђĕç упполномођђĕннăйсем совета. Унтан претçетаттĕл умне пырса тăрса тӳрех кăларса çаплаттарђĕç районран панă хута.

— Пире сĕрекене лектерĕпĕр терĕр пуђ те, анђах симĕсрехха. Ав, вула!—терĕ Тутиарăв, куçĕсене мăђлаттарса.

— Çавă ёнтĕ... Рас саккун çук тăк, мушик çăварне нимĕнле «творккă» та тĕркелесе ђикеймĕн,—шăлаť сăмаха Илментей.

Нумайђђен ăнланаймасăр пăхса ларђĕ Купсов районран килнĕ хут çине. Темиçе хут та вуласа тухрĕ—теççаťтитворккă пирки нимĕн те каламан. Хута сахал вĕреннĕ пирки ăнланаймастăп пулĕ тесе тата тепер хут вулаť вăл.

— Ăнланаймастăн-им? Çапла çăв ăнланма йăвăр. Претçетаттĕл пуласси куккăђ сăмси çисе йарасси мар çав вăл,—тăрăхлаť Тутиарăв.

— Латнă,—тавăраť Купсов,—раçпиромсса. Çапах та кунта теççаťтитворккăсем çинђен нимĕн те каламан-ха, снаш. Тыттарас терĕр пулĕ, йолкки та палкки!

Тутиарӑвӑн тутисем ҫӗтреме пуҫларӗҫ, куҫӗсем Купсов ҫине шӑтарас пек пӑхаҫҫӗ.

Ҫак карттина курса ларнипе епӗ ҫавтери вӗҫӗрхенсе ҫитрӗм. Ҫапах та хам тарӑха палӑртас мар тесе йуптаранҫи пулатӑп:

— Йатлаҫмасӑрах ан вӑрҫӑр ӗнтӗ. Мӗн уйӑрма тытӑнтӑр?

— Ав, вула.—тавӑрат Тутиарӑв сиввӗн.

Епӗ машшинпа пиҫетленӗ хут ҫине тинкӗрсе пӑхатӑп.

— Кам ҫырҫӗ ку хута?

— Претҫетаттӗл.

— Мӗнле претҫетаттӗл?

— Райӗҫтӑвком претҫетаттӗлӗ.

— Куҫӑнах тыттарайман, тӑванӑм. Райӗҫтӑвком претҫетаттӗлӗ Титтов, а кунта урӑххи алӑ пуснӑ.

— Вӑл, конешнӑ, ҫапла пулӗ те... пирӗн ӑҫтан пӗлес? Епир вӗренмен ҫынсем, тӗттӗм. Те претҫетаттӗл пирӗншӗн пулсан, те ҫеклеттар... ҫырса паҫӗҫ те илтӗмӗр...—йуптарат Илментей.

— Ку хута саккунлӑ хут вырӑнне йышӑнма пултараймастпӑр.

— Мӗншӗн?

— Мӗншӗн тесен ырӑ мар шӑршӑ кӗрет ку хутран,—касса татрӑм епӗ, райӗҫтӑвкомран илсе килнӗ отношшенийе портфӗл ӑшне персе ҫиксе. Унтан претҫетаттӗл йенне ҫавӑрӑнтӑм та:

— Халех Шенттала стантсине ҫитиҫҫен лав хатӗрле. Хам кайатӑп ку ӗҫе йӗрлеме,—терӗм.

Тутиарӑв пиҫӗ ҫинҫе йун выҫани сисӗнҫӗ.

Вуннилӗк минутранах епӗ стантсӑна тухса вӗҫтертӗм. Ҫав каҫах ҫитрӗм района. Ҫи малтан райкома кӗрсе тухрӑм, анҫах унта никам та ҫуккине кура райӗҫтӑвкома пытӑм. Райӗҫтӑвкомра саҫҫетани. Ораттӑр каласа пӗтерессе кӗтсе тӑмасӑрах персе кӗрсе кайрӑм епӗ саҫҫетанине. Унтан райком ҫекреттарӗ умне пытӑм та портфӗлти хута кӑларса тыттартӑм.

— Что вы делаете? Почему срываете план?

— Мӗн пулнӑ?—ыйтат райком ҫекреттарӗ, епӗ панӑ хут ҫине тинкерсе пӑхса.

— Партти политтӗкне улӑштарма камра ирӗк? Кам ответ тытат партти политтӗкӗшӗн: орканисатси-и, йе райӗҫтӑвкомран ҫак хута ҫыракан оппортуниссем-и?

Райком ҫекреттарӗ мана ӑнланҫӗ.

— Кӑм ҫырнӑ ку хута?—ыйтрӗ вӑл РӖК претҫетаттӗлӗнҫен. Претҫетаттӗл отношшени ҫинҫи потпӗҫе пӑхрӗ.

— Акроном Алексейёв алă пусиă.

— Халех ђёнтерсе кил ăна кунта.

Рёк претçетаттёлё саççетанирен тухса кайрё. Токлатђёк каллех каларçма тытăнђё. Райком çекреттарё ăна пўлђё.

— Тăхта, Миткин йулташ, вуниилёк минутлăх перерыв туса илер.

Т клатђёк ђарăнђё те крафин ăшёнђен çур стаккан шывтултарса ёçрё. Саççет нир и йулташсем урамалла тухрёç, хăшё-пёрисем пирус исене тивертсе йађёç.

— Мёнле пулђё ха ку ёç?—ыйтатăп епё.

Райком çекреттарё ђёнмест. Таран шухăша путнă вăл çак самантра. «Хресђ всене колективлă ёçе хăнăхтарас тесе партти теççаĭтитворккăсем тума хушнă. Райčçтăвкомри хăшпёр оппортуни сем райком тирективне улăштараççё... Вретиттёлствă...» шутласа илђё пулмалла вăл.

Шухăш çинех Алекçейёв акроном çитсе кёђё. Райком çекреттарё ăна сётел çинђе выртакан хут çине тёллесе кăтартрё.

— Е ё çырнă и ку хута?

— Епё, вара мён?

— Суккин сын! Акă мён...—кăшкăрса тăкрё райком çекреттарё хайаррăн.

— Никкиттин йулташ, епё нимён те ăнланаймастăп...

— Партти орканисатсийён тирективне улăштармашкăн кам ирёк пађё сана?!

— Епё нимён те улăштарман.

— Ку хута мён шутпа çыртăн?

Алекçейёв акроном Никкиттин умёнђи хута илсе вуласа тухрё.

— Ну кала. Суйса пар мён те пулин.

— Ку хута çырнинђен нимён те тёлёпмелли çук,—пуçларё Алекçейёв.—Ё ё çапла пулђё: ёнер Ваççиђийёвккă поçç лкк нђен икё хресђен килђёç. «Йалта интивитуалиссене çёр памаççё, вёсем çинђе шутланакан çёре в леçме ђарса тăраççё», тесе ўпкелешрёç. Манран хут çырса пама ыйтрёç. Вара епё çыртăм, та па-тăм, урăх нимён те çук...

— Мёнле ха есё вёсен сăмахне итлеме пултартăн? Санăн проттоккол çине пăхмалла пулнă,—ыйтатăп епё.

— Мёнле протт ккол çине?

— Вёсене йалхалăх пуххин проттоккол ўкерђёкне панă. Çав

ӳкерҫӗк тăрăх татса памалла пулвă сан вӗсен ӗçне.

— Çу-ук, мана вӗсем нийепле ӳкерҫӗк те кăтартман. Епӗ ыйтрăм вӗсенҫен: «Йалсоветӗнҫен мӗнле те пулин хут парса йамав-и сире?»—тесе ыйтрăм.—«Нимӗнле хут та памарӗç пире»,—терӗç вӗсем.

— Мӗн пур хресҫен сăмахне те ӗненес пулмасть çав, Алекçейӗв йулташ. Есӗ совет рапотникӗ, сана партти поҙшевикла тӗрӗслӗхпе ӗçлессе шанса ответлă портфӗл тыттарнă. А есӗ клас тăшманӗсен сӗрекине лекетӗн. Сталă пыть, тăшмансем санран та ҫейиерех пулнă,—ăнлантарать Никкиттин.

— А мӗн тунă-ха вара вӗсем?

— Пӗтӗм çураки планне тустарнă, акă мӗн. Партти умӗнҫе есӗ пысăк айăпа кӗтӗн. Хăвăн йăнăшна халех тӳрлетме хушатпăр.

Алекçейӗв хыпаланса калаçма пуçларӗ.

— Пӗлмен, пӗлмен. Пӗлнӗ пулсан кутран тапсах кăларса йанă пулăттăм. Йалсоветне оппортунисла елементсем кӗрсе ларса уйрăм хуçалăхсем çине йурийех çавăрăнса пăхмаççӗ пулӗ тесе шутлавă епӗ. Ҫăнахах та тăшмансем манран ҫейиерех пулнă иккен. Халех тухса кайатăп, Никкиттин йулташ. Ваççиҙйӗвккă поççолккине. Хам ответлăхăмпа теççаттитворккăсем орканисатсилесе килетӗп.

— Пӗçернӗ пăтта автарса çийесех пулать. Анҫах есӗ каймастăн унта. Çемевăв йулташ пӗҫҫен те пултарать—халӗ йӗрлесе тупрăмăр,—тавăрҫӗ Никкиттин.

Унăн аллинҫе шăвкăрав шăнкăртатрӗ. Тула тухса кайнă йулташсем пуçтарăнҫӗç. Токлатҫӗк каллех калаçма пуçларӗ. Саççетанирен тухса епӗ хваттерелле утрăм.

## 8. РАЙОНРИ ХАÇАТ РЕТАКСИНҪЕ

Тепӗр кунне епӗ районри хаçат «Ленин çулӗпе ретаксине кӗтӗм. Кăпинетра ретактăр пӗҫҫенех.

— Как тела?—ыйтатăп епӗ алă тытса.

— Тела как сашă пела!— тавăрать Апроççимăв йулташ кулкаласа.

— Мӗнле апла?

— Маттериалсем çитеймеççӗ. Первомайски номӗр кăларма хатӗрленетпӗр-ха. Çырса пар-ха мӗн те пулин.

— Çырмалли нумай, пиҫетлесе кăна çитĕр,—епĕ ретактăра çĕнĕ маттериалсем патăм.

— Вот аван. Питех те хавас. Малашне те çырсах тăр. Ну халĕ аҫта ĕнтĕ, сана хамăрăн пĕҫĕк типпокрафипе паллаштарам,—илсе кĕрсе кайрĕ мана Апроççимăв йулташ тепĕр пӳлĕме.

Типпокрафи пĕр пĕҫĕкçĕрех пӳлĕмре вырнаçнă. Алăкран кĕрсенех «америкканккă» *) çавăрăнса шалтлатса ларни куçа тăрăнҫĕ. Пĕр вăрăм, хура пиншаклă çын пĕшкĕннĕ те машшин умĕнҫе темĕн тĕрмешет. Ҫеретлĕ номĕр пиҫетлеççĕ пулас. Епĕ машшин умне пырса тăтăм. Пĕшкĕнсе тĕрмешсе тăракан çын пуçне çĕклерĕ:

— Ех, ҫорт воçми, Çеменăв!... Есĕ те кунтаçке.

— Кунта.

— Мĕн ĕçлесе çӳретен?

— Çураки иртерме килтĕм.

— Хăш йалта ĕçлетĕн?

— Ваççиҫйĕвккă поççолккинҫе.

— Нумай пулаҭ-и килни?

— Пĕр икĕ ерне çитет ĕнте. А есĕ тата хăçан килнĕ?

— Епĕ килни скорă уйăх çитет ĕнтĕ,—таварăҭ ман палатрап. Машшин патĕнҫе ĕçлекен çын Мускаври ҫавашла хаçат «Ҫăваш хресҫенĕн» ретактăрĕ Молостовкин йулташ пулҫĕ иккен. Епир тата хавасланарах калаçма тытăнтăмăр.

— Ну йепле, килĕшрĕи-ха Ҫаллăпуç?

— Как клас...

— Çапла çав, кунта мĕн пур вăйа хурса ĕçлемелле. Епĕ хам та акă икĕ ернеллĕх килнĕскер çаплах калла кайаймарăм-ха.

— Пулăшас пулаҭ хаçата.

— Как ше. 3 пăт шрифт **) илсе килсе патăм-ха. Мускавра хамăр хапрăкра йатарласах шăраттартăм,—ответлет Молостовкин.

— Çапла калаçса тăнă вăхăтра типпокрафине икĕ хĕрарăм кĕрсе тăҫĕç. Пĕри, çамрăкки, ҫăвашла тумланнă, тепри ватăраххи майра тумĕпе.

— Ваççиҫйĕвккăри упполномоҫҫĕннăй кунта çук-тăр?—ыйтрĕ майралла тумланни.

— Епĕ, мĕн вара.

---

*) Хаçат пиҫетлемелли пĕҫĕк машшин.

**) Сасполлисем.

— Райком мана сирӗн пата хӗрарӑмсем хушшинҫе ӗҫлеме йарат. Хушаматӑм манӑн Марккина.

— Апла иккен. Пире как рас хӑрарӑмсем хушшинҫе ӗҫлекен кирлӗҫҫӗ-ха. Есир хӑҫан кайатӑр?

— Хаҫ тесен халех хатӗр.

— Пӗрле кайӑпӑр еппин.

— Йурат.

— Ултӑ сехетре стантсӑра пулатӑп епӗ.

Хӗрарӑм йулташсем тухса кайрӗҫ. Епир районри хаҫатӑн ӗҫӗсем ҫинҫен калаҫма тытӑнтӑмӑр.

— Йӑвӑр ҫав кунта ӗҫлеме,—ӳпкелешет Апроҫҫимӑв йулташ, —условисем ҫук. Районри орканисатсисем хаҫат ҫине ҫавӑрӑнса та пӑхмаҫҫӗ. Укҫа ҫук. Райфо укҫа тупса парасси ҫинҫен шухӑшласа та пӑхмаст. Райфори хӑшпӗр тӑмҫамкасем хаҫата хупасси ҫинҫен ӗмӗтленеҫҫӗ.

— Вӗсем пиҫетленекен сӑмах йепле пысӑк ӗҫ тунине ӑнланаймаҫҫӗ ӗнтӗ,—астутарат Молостовкин йулташ.

— Йаснӑ ӑнланмаҫҫӗ. Хаҫат урлӑ пӗҫертме тытӑнмалла таха вӗсене...

— Лайӑхрах пӗҫерт. Нимӗн хӑрамалли те ҫук вӗсенҫен. Кирлӗ пулсан епир хамӑрӑн крайри хаҫат «Колхоҫнӗк» урлӑ та хӗртме пултаратпӑр вӗсене.

— Халӗ те хӑрамастӑп епӗ. Райкомра ретакси хушшинҫе ҫыхӑну лайӑх. Малтанлӑха кирек йепле ӗҫе те аванлатма йӑвӑр. Пурна киле ӳсӗпӗр-ха тата.

Ҫӑнахах та районри хаҫатӑн условийӗсем ҫӑмӑл мар. Типпокрафинҫи рапотнӗксем 5 ҫын пӗр пӗҫӗк пӳлӗмре ӗҫлеҫҫӗ. Хатӗрӗсем ҫук, сывлӑш ҫитмест. Пӑҫӑ, ҫуна тӑвӑр туйӑнат.

Ҫапах та «Ленин ҫулӗпе» хаҫат пысӑк ӳсӗмсем тунӑ. Пуринҫен малтан хаҫат ӗҫӗнҫе ӗҫлекен йулташсем хӑйсен ӗҫне йуратаҫҫӗ, уншӑн пӗтӗм вӑйа хурса тӑрӑшаҫҫӗ. Хаҫат политтӗк тӗлӗшӗнҫен тӗрӗс ҫул ҫинҫе тӑрат. Хаҫхи тапхӑрта мӗнле лосӑнксем памаллине пӗлет вӑл. Паллах, района талкӑшӗпех колективлас ӗҫре ку хаҫат пысӑк вырӑнах йышӑнса тӑрат.

Малашнехи ӗмӗтсем аслӑ пирӗн. Пайанхи кун епир ыранӑн ырлӑхӗсене ӗмӗтленсе ӗҫлетпӗр. Ҫак ӗмӗт ҫитессе хытӑ шаннипе епир кӗрешӳре пысӑк ҫӗнтерӳсем тӑватпӑр. Вӑл ҫӗнтерӳсене «Ленин ҫулӗпе» хаҫат та алла илессине шансах тӑмалла.

## 9. ЕПИР МӖНШӖН УСЕЙМЕСТПӖР?

Районран таварӑнсан Марккинӑ йулташа хӗрарӑмсемпе пуху иртерме хушрӑм. Хам йалсовет кӗҫ̌елерне кайса Тутиарӑвпа Илментейа ҫ̌ӗнтертӗм. Вӗсем нумай кӗттермерӗҫ, епир ҫ̌асах Тутиарӑв, Илментей тата епӗ куҫа-куҫӑн пултӑмӑр.

Ирӗке вӗреннӗ хайар йытта сӑнҫ̌ӑрпа кӑкарса хуратӑн та вара вӑл ниҫта кайса кӗрейми турткалашма тытӑнать. Сӑнҫ̌ӑра туртса татас пек сике-сике ӳкет, асав шӑлӗсемпе кышлать хӑнҫ̌ӑр ҫара тимӗре, нимӗн тума аптӑраса ҫитнипе сӑнсӑрӑн кӑшкӑрса улласа йарать.

Сӑнҫ̌ӑрти йытӑ майлах туйӑнать мана пайан Тутиарӑв та. Ман умра вӑл сиксе туллашать, йӗпе хулӑн тутисене мӑкӑлтаттарать, сурҫ̌ӑкӗсене пӗрхӗтет. Епӗ ӑна пӗтӗмпех хӗстерсе ҫитертӗм. Пӗр сехет хушши ниҫталла пӑркаланма памасӑр тӗпкӗҫ̌летӗп.

— Кала ырӑ сӑмахпа ыйтнӑ ҫ̌ух: кам шӑхлиҫ̌ипе тӑшлатӑн?

— Мана никам шӑхлиҫ̌и те кирлӗ мар.

— Краштанин Тутиарӑв! Епӗ санпала выҫ̌ама тутламастӑп. Йе есӗ мана халех каласа паратӑн, йе епӗ сана халех Кӗ Пӗ Уна ӑсататӑп...—Епӗ ӑна хӑратас тесе йурийех ҫекретнӑй хут ҫыранҫ̌и пултӑм. Тутиарӑв тӗсӗ улшӑнҫ̌ӗ. Нимӗн ҫ̌ӗнмесӗр ларакан Илментейе те ҫ̌ун кӗҫ̌ӗ. Вӑл ман патӑмарах сиксе ларҫ̌ӗ.

— Ҫеменӑв йулташ, мӗн харкашса аппаланмалли пур ҫавӑншӑн? Харкашмаллӑх ӗҫӗ ҫук. Ырӑ сӑмахпах та каласа пама пултаратпӑр вӗт епир.

— Ну кала.

— Каласси каҫ̌ки...—Илментей Тутиарӑва куҫран тинкӗрсе пӑхса ытарлӑн темӗн ыйтрӗ.—Проттокколне илсе те кайас мар терӗмӗр тата... Ухмах ҫав епир, ниҫта та ӑс ҫитерейместпӗр...

— Теҫҫаттитворккӑ ҫинҫ̌ен мӗн калаҫрӑр районра?

— Ун ҫинҫ̌ен тапратман та.

— Илтетӗн-и, тусӑм, мӗн калаҫать санӑн йулташу?—ыйту ывӑтрӑм епӗ Тутиарӑв ҫине. Анҫ̌ах вӑл нимӗн те ҫ̌ӗнмерӗ.

— Ӗҫ татӑклӑ хаҫ̌ сирӗнпе. Киле кайма та пултаратӑр ӗнтӗ.

— Штошӗ, кайӑпӑр. Малашне татах тӗл пулма йурать-ха санпала,—тесе хӑварҫ̌ӗ Тутиарӑв, алӑка шалтлаттарса хупса. Вӗсем тухса кайсассӑнах претҫетаттӗл ҫитсе кӗҫ̌ӗ.

— Пӗлеймерӗним, снаш?—ыйтрӗ вӑл тӳрех.

— Мĕн пĕлеймерĕним?

— Тутиарăвсем йепле майпа улталанине пĕлеймерĕним те-тĕпçке.

— Епĕ ăна такçанах пĕлетĕп.

— Хăйсем каларĕç и?

— Каласшăн мар. Аран тĕпҫесе тупрăм.

— Апла пулсан ĕç кайаҫ. Пирĕн поççолккă хресҫенĕсем саккуна хирĕç мар вĕсем. Саккун хушнине итлеççĕ. Халĕ ĕнтĕ Тутиарăвсен ултавне пухура каласа памалла та, тӳрех ушкăнсем тума тытăнмалла.

— Ку кăна çителĕклĕ мар. Вĕсем çинҫен района, ППУна пĕлтерес пулаҫ.

— Тутиарăвĕ çинҫен пĕлтерсен те йураҫ, а Илментейне не стойĕт. Вăл пире вимĕнех те сийен туман...

— Есĕ пуху хăвалаттар еппин, епĕ çекретнăй паккет хатĕрлем.

— Йураҫ. Епĕ халех Елекçейа кайса калăп.

Купсов тухса кайрĕ. Епĕ çекретнăй паккет хатĕрлеме лартăм. Пĕрерĕн, икшерĕн киле-киле кĕреççĕ мушиксем совета. Пухăнни пĕр каççăр пуçлă пак-пакĕсене кăларса тĕтĕм йăсăрлантараççĕ. Кăн-кăвак пĕлĕт шăвăнаҫ лутра маҫҫа тăрăх тĕпелтен алăк патнелле. Кам мĕн çинҫен пĕлет çавăн çинҫен калаçаççĕ мушиксем.

— Есир, муҫейсем кунта шалттай-палттай ан калаçăр-ха. Луҫҫĕ колхос çинҫен тепĕр хут шухăшласа пăхăр,—хĕтĕртет Купсов.

— Мĕн шухăшласси пур пирĕн? Шухăшламаллине такçанах шухăшласа татнă пуҫ...

— Колхоса кĕрес пулаҫ.

— Кĕмелле таха...

— Тата мĕн ҫăрмантараҫ сире?

— Арăма ӳкĕтлеймерĕмçке. Ниçтан та ӳкĕте кӳртме çук вĕт ватсупнăскерне.

— Есĕ ху кĕр. Арăму хăвăнтан йулмĕ.

— Çук ĕнтĕ. Халĕ ĕçе тухса кайатпăр çитменнине. Кĕркуннеҫҫен кĕтес пулаҫ витнă.

Халăх хушшинҫен пĕр именҫĕклĕ ыйту шăвăнса тухрĕ:

Колхосне аван йапала теççĕ ĕнтĕ... Вăл тĕрĕсех те пуҫ... Сывă маррисене кам тăрантарĕ унта?

Хресҫенсем колхос ҫинҫен пӗтӗмпех ӑнланман иккен. Епӗ хам та муҫисемпе калаҫма хутшӑнтӑм.

— Мӗн терӗн ҫак есӗ, муҫи?—ыйтрӑм епӗ, илтмӗш пулса.

— Ӗҫлеме пултараймаинисене колхоса илеҫҫе-и тетӗпҫке. Ҫавна пӗлес килет манӑн.

— Мӗншӗн илес мар, илетпӗр. Колхоса кулаксемпе лишшентсӑ таврашӗсене кӑна илмеҫҫӗ.

— Ӗҫлеме пултараймаинисене кам тӑрантарса усрӗ-ха унта?

— Вӗсене ваҫҫи уйрӑм фонт тӑваҫҫӗ...

Ыйту хыҫҫӑн ыйту сиксе тухма пуҫларӗ. Шакӑлтатсах калаҫма тытӑнтӑмӑр хресҫенсемпе. Пӗр ҫемйери нек халапа шӑлса ларатпӑр.

— Вӑт, йулташ, пире таксанах ҫакнашкал йеррипен, хамӑр ҫӗлхепе ӑнлантарнӑ пулсан епир таксанах колхос пулмаллаҫҫӗ. Ӑнлантаракан пулман пире...

— Ҫӑнахах та ҫав. Хӑратса кӑна пурнатҫӗҫ пире. Мӗншӗн кӑштах малтарах килмен-ши есӗ?

— Малтан килме май пулман.

— Вӑт ҫын, покранимӗр ҫын. Мӗн ыйтнине пӗтӗмпех каласа парать, лайӑх...

— Халӗ вӑхӑт иртнӗ тетӗрим колхоса кӗме? Ҫырӑнас шутлисем халӗ те ҫырӑнма пултараҫҫӗ.

— Кайарах йултӑмӑр ҫав.

— Нимӗн те кайа мар. Ҫырӑнӑр, ҫырӑнӑр, йулташсем.

— Мӗнле ши, аҫа...—пуҫне хыҫать муҫи.

— Нимӗн мӗнли те ҫук. Турт та тат хӑвӑн уйрӑм хуҫалӑх кӑшӑлне. Нушапа хӗнхуртан пуҫне нимӗн те паман вӑл сире.

— Тавай-ха ҫырӑнса пӑхам еппин. Мӗн пулать те мӗн килетӗн ӗнтӗ...

— Тата кам ҫырӑнас тет?

— Ҫырӑр, аплах пулсан, мана та.

— Тата кам? Ну? Иулташсенҫен ан йулӑр!

— Йулас мар, вернӑ. Аҫа, ҫырӑр еппин.

Пилӗк хуҫалӑх хутшӑнҫӗҫ ҫак пухура. Ыттисене вырӑнтан тапратма пулмарӗ. «Ӗҫлесе кӑтартҫӑр-ха, вара хамӑрах кӗрӗпӗр», теҫҫӗ.

Колхос ҫинҫен хресҫенсене ҫӑнах та кунта питех те сахал каласа ӑнлантарнӑ иккен. Ман умӗн ӗҫленӗ упполномоҫҫӗннӑй вырӑс пулнипе хресҫенсем унпала ӑшшӑнах калаҫман. Ҫитмен-

нине вӑл хӑй те кӑмӑллӑнах пӑхман хресҫенсем ҫине: ытлашширех йатланӑ, ытлашширех хӑратнӑ. Вӑл упполномоҫҫӗннӑйа районра пӗрре курса калаҫнӑҫҫӗ епӗ. Хушамаҫӗ унӑн Тетловскийҫҫӗ пулас. «Иалта 30 протсент перекип туни питех те нормаҫна», тетҫӗ вӑл мана ун ҫухне.

Халӗ ҫавсене петӗмпех аса илетӗп те колхос мӗншӗн ӳсменнин сӑлтавӗ пӗтӗмпех куҫ умне тухса тӑрат. Колхос йухӑмне малалла ҫӗклентерсе йарас ҫӗрте массӑллӑ ӑнлантару ӗҫӗ тӗп вырӑн йышӑнса тӑмалла. Йалта ӗҫлекенсенҫен хӑшӗ-пӗрисем, Тетловски пеккисем, ҫакна ӑнланаймаҫҫӗ, ҫавӑнпа та пӗтӗм ӗҫе ҫӑрмантарса кӑна пыраҫҫӗ...

Пӗрлешсе ӗҫлемелли ушкӑнсем тӑвас пирки ӗҫ питех те лайӑх иртрӗ ку пухура. Хресҫенсене Тутиарӑвсем йепле улталанине каласа патӑм та весем хӑйсемех сӳтсе йавма тытӑнҫӗҫ.

— Йепле-ха вӑл саккуна улталамалла? Улталаса ҫӳреме суйламан вӗт епир вӗсене.

— Тутиарӑв вӗреннӗ вӑл халӑха улталама...

— Шулӗк вӑл!

— Епир саккуна хирӗҫ нихҫан та пыман, пымастпӑр та, пырас та ҫук.

Ҫакнашкал калаҫса хресҫенсем хӑйсемех ушкӑнланма пуҫларӗҫ. Пӗтӗмпе 4 ушкӑн турӑмӑр. Кашни ушкӑнрах пӗрер ҫемйе лашасӑррисем. Хресҫенсем вӗсен ҫӗрӗсене укҫасӑрах ӗҫлесе пама пулҫӗҫ.

Ҫакӑнпа пуху саланҫӗ. Хресҫенсем тӳрех хире ҫӗр валеҫме тухса кайрӗҫ. Анҫах епир Купсовпа иксӗмӗр советах йултӑмӑр. Кӗҫӗр райӗҫтӑвкома колективисатси свотки тӑратмалла. Ҫав свотка хатӗрлеме лартӑмӑр.

## 10. ХӖВЕЛ АНАС УМӖН

Каҫ пулса килет. Вӑрман ҫинҫен хӑмӑр хулӑм пӗлӗтсем йӑвӑррӑн ҫӗкленеҫҫӗ. Поҫҫолккӑна сулхӑн ҫапрӗ.

Сасартӑк алӑк шалтлатса уҫӑлса кайрӗ те совета Марккина вӑрхӑнса кӗҫӗ.

— Атӑр-ха хӑвӑртрах, пӗр ӗҫ пур.

— Мӗн пулнӑ? Мӗн?—ыйтрӑмӑр епир Купсовпа пӗр харӑс.

— Атӑр, ҫитсен курӑр унта.

— Кунтах кала.

— Каласа тăма вăхăт çук, атăр хăвăртрах!

Епир тухрăмăр.

— Пĕрин анкартинҫе улăм айĕнҫен тырă кăларса сăвăраççĕ,—пĕлтерҫĕ Марккина шăппăн, урама тухсассăн.

— Ну-у? Аçта?

— Ак советпа йунашаррисен анкартинҫе.

— Тумантейĕв Йакурсен, снаш,—вĕçлерĕ Марккинă сăмахне Купсов.

Епир анкартине çитрĕмĕр. Йĕтем çине шăналăксем сарса пăрахнă. Пĕр çамрăкрах çын çейăлккăпа ĕçлет. Тепĕр хăрарăм ăна пулăшат. Епир пырсассăн вăл ĕçлеме ҫарăнҫĕ.

— Сывлăх пултăр ĕçлеме!—терĕм епĕ, вĕсене хăратас мар тесе.

— Спаççипă, килĕрах-ха,—тавăрат çамрăк çын. Пĕр хушă епир сăмах тупаймасăр нимĕн ҫĕнмесĕр тăтăмăр.

— Мĕншĕн ку тырра хаҫ тин сăвăратăр?—ыйтрăм епĕ, никам та сăмах хускатма шутламаннине кура.

— Кĕркунне ĕлкĕреймерĕмĕр.

— Нумай-и кунта санан тырру?

— Пĕр вăтăр пăт пулĕ. Манăн кăна мар кунта, аттепе иксĕмĕрĕн.

— Мĕншĕн улăм айĕнҫе тытатăр вăра вăл тырра?

— А ăçта хумаллаҫҫĕ? Çавах ĕнтĕ вăл...

— Çавах мар, йулташ. Есир ăна пытарса усрана.

— Мĕн пытарса усрамалли пултăр унта? Пытарнă пулсан епĕ ăна кăнтăрла сăвăрмастăп та.

— Вăрттăн çĕрте выртакан тырăсене топровоҫнă кăларма кирли çинҫен каласа панăçке сире?—астутарат Купсов,—мĕншĕн çав вăхăтра кăлармарăр?

Çамрăк çын хĕрелсе кайрĕ. Пĕр самант хушши вăл нимĕн калама аптăраса тăҫĕ.

— Первăй рас кăна илтетĕп епĕ ун çинҫен,—терĕ вăл йулашкинҫен хăравçă сасăпа.

— Çук, Ротионăв йулташ, улталатăн. Вăл хута есĕ ху та темиçе хутҫен те вулавă. Килĕшмест сана капла хăтланни. Ху ревиçи комиççин претçетаттĕлĕ...

Ротионăв ҫĕнмест. Ҫĕлхине такам тăлласа лартрĕ унăнне.

— Çапах та кунта вăтăр пăт кăна мар тырă. Сахалтан та епĕ çĕр пăт хуратăп.

Ротионăв сасартăках пуçне çĕклерĕ:

— Мĕн калаçатăн ес? Ăçта унта çĕр пăт? Нумай пулсан 45 пăт пулĕ. Унтан ытлашши вунă кĕрепенке те тухас çук. Хаѕ вăл ахаѕ, сăвăрмантан нумай пек курăнса выртаť,—пÿлѕĕ вăл мана, хыпаланса.

— Виçсе пăхăпăр. Курăнĕ унта...

— Виçĕр пошалстă.

— Пытарса хунă тырă урăх çĕртре çук-и сирĕн?—ыйтрĕ Марккина.

— Тырă пытарма епир кулаксем мар вĕт,—тавăрѕĕ лешĕ, куланѕи пек пулса.

— Çапах та, йулташсем, кĕлетсене кайса пăхар,—сĕнтĕм епĕ. Ытти йулташсем манпала килĕшрĕç.

Анкартинѕи тыррине хураллама шкул аѕисене хушрăмăр. Хамăр Ротионав ашшĕсен килне кайрăмăр. Килти кĕлетсенѕе ѕăнахах та ытлашши тырă çук. Кил таврашĕнѕе ухтарса та пăхрăмăр, анѕах пытарса хунă тырă тавраш тупăнмарĕ. Вара анкартинѕи тыррине сăвăрса тасатма хушрăмăр. Хĕвел аннă çĕре Тумантейĕв Йакур кĕлетне çитмĕл виçĕ пăт тырă турттарса хывса пиѕетлесе илтĕмĕр.

## 11. ШУÇĂМ КИЛНĔ ЅУХ.

Тĕксĕм ѕÿреѕе хушăкĕсевѕен ирхи шуçăм йăпшăнса кĕѕĕ. Çамрăк уйăх—ылтăн кăвакал шултăрканă лăпсăрка пĕлĕтĕн çĕтĕк çанни ăшне ѕăмса пытанѕĕ. Пахѕари хурăнсем çурхи хаваслăхпа сывлаççĕ.

Пĕѕѕенех ларатăп епĕ кĕçĕр шкулта. Крайкома йама своткăсем хатĕрлемелле, хваттерге лампă çук. Çавăнпа та шкула килтĕм ĕçлеме. Шкулра шăп. Шпалер вырăнне çыпăçтарнă хаçатсем айĕнѕе тараккансем ѕăшăлтатса çÿрени кăна хумхатаť каçхи шăплăха.

Сасартăк таçтан урамран, поççолккă ту вĕçĕнѕен кĕмсĕрт!—турĕ темĕскер. Епĕ шартах сиксе тăтăм та урамалла ѕупса тухрăм. Ту вĕçĕнѕе йытăсем вĕреççĕ, такама тапса хыпас пек туллашаççĕ. Пĕртак тăрсан йытăсем лăпланѕĕç.

— Кĕмсĕрт!..—илтĕнет каллех сасă.

Епĕ ѕарăнтăм, Иглеме пуçларăм.

— Хĕнтĕр-хентĕр!—йăтăнса анѕĕ темĕскер тахăшин сарайĕ

хыçĕнҫен. Татах йытăсем лăйлама тытăнҫĕç. Епĕ тăвалла утрăм. Хăлхасене ҫанках тăратнă хам, унталла та кунталла пăхкаласа кăна пыратăп. Кашни сассах тинкĕрсе итлетĕп. Вăрахăн йăпшăнса пырсах Тумантейĕв Йакур пӳрҫĕ тĕлне çитрĕм. Шалта такам ĕмĕлетнĕ пек туйăнаť. Епĕ сывлама ҫарăнса итлетĕп.

— Кĕмсĕрт!..—тăваť пӳрт урайĕ.

— Мăкăр мăкăр-мăкăр ..—макăртатаççĕ шалта.

Сапор çуммипе вăрахăн шăвăнса епĕ пӳрт ҫӳреҫи умне пырса тăтăм. Шалта вăрахăн калаçаççĕ, çав вăхăтрах пĕр вырăнтан тепĕр вырăна темĕн куçараççĕ. Анҫах мĕн калаçнине ăнланма çук. Епĕ ҫĕрне вĕççĕн тăрса вăрахăн шалалла пăхрăм. Пӳртри саксене пĕтĕмпех вырăнтан хускатнă. Урай хăмисене уçнă. Пĕри, хĕрарăмла тумланнăскер, кăштах пĕшкĕннĕ, аллипе хăй хунар тытнă. Ҫӳреҫе çине çутă ан ӳктĕр тесе хунарне ҫаппанпа ҫĕркенĕ. Тепри урай хăми айĕнҫи тăпраса кĕреçепе ҫавса шăтак тăваť. Виççĕмĕшĕ—тултан пăтавккапа тырă тултса шăналăк çине пушатаť.

— Тырă пытараççĕ!—çиççе кайрĕ шухăш манăн пуçăмра. Епĕ çавăнтах çунат хушнă пек пулса Вăкăр çырми урлă ыткăнса каçрăм та колхоçнĕк—патрак Пиктулăв Елекçей ҫӳреҫи умне çитсе тăтăм.

— Тăкăр-тăкăр тăкăр...—тутаратăп вăрахăн ҫӳреҫерен.

— Е-е?—илтĕнҫĕ шалтан ыйхăллă сас.

— Уç ха, Елекçей.

— Кам унта?

— Ан кăшкăр, йут мар—хамăр çын. Уç-ха.

— Мĕн пулнă?

— Аťа, тумлан хăвăртрах.

— Ăçта каймалла?

— Йала кашкăрсем çавăрса илнĕ. Ил пăшална...

Елекçей çара пуçăн, çара уранах пăшал йатса тухрĕ.

— Тумантейĕв Йакур тырă пытараť. Кайса сăнаса тăр вăрахăн, епĕ Купсова вăрататăп,—ăнлантартăм епĕ, Елекçей тула тухсан. Елекçей пĕр сăмахсăрах Тумантейĕв килĕ йеннелле вĕçрĕ. Епĕ Купсова вăратса тухрăм.

Пĕр самантрах Тумантейĕв Йакур çут тне алкарти çавăрса илтĕмĕр. Шăнпăн сыхласа тăратпăр малашне мĕн пуласса. Анкарти алăкĕ патне епĕ хам кайса тăтăм—лавпала тырă тийесе тартĕç тесе шутларăм пулас. Анҫах тырă турттарса тухни

пулмарě. Кăштах тăрсассăн Иакур пўртěнҫи сасҫў паҫах лăпланҫě пулмалла.

Ман патăма Купсов ҫупса ҫитрě.

— Аҭа, лăпланҫěҫ.

— Ҫим ха, кăштах тăхтар. Тен халех лавсемпе тырă тийесе тухěҫ.

— Нимěн те ҫук. Пурте ҫывăрма выртрěҫ ěнтě.

— Аҭа еппин,—тавăртăм епě.

— Ну, аҭăр кěрсе вăратар,—тет Купсов.

— Вăратма кирлě мар. Ан тив ҫывăрҫҫăр кěҫěрлěхе, ҫăрмантарас мар,—ответлерěм епě.

— Мěн ҫăрмантарас марри пур. Ҫийěнҫех тытмасан ыран унăнне йěрве те тупаймăн.

— Тěрěс! Ҫăн калаҭ!—килěшрěҫ Муҫҫа пиҫҫепе Елекҫей.

— Ҫук, йулташсем! Ку ěҫе питех те асăрхаса тăвас пулаҭ. Васкама кирлě мар. Кěҫěрех ун патне кěнинҫен пире нимěн те усă та ҫук. Ыран килсен тата интересларах. Мěн калаҫě ун-а ыран вăл пирěн умра Ват ун ҫухне тытрăмăр вара ăна,—ăнлантаратăп епě. Ну, майҫҫен ўкěтленě хыҫҫăн манпала йулташсем килěшрěҫ. Хěвел тухас умěн епир килсене салантăмăр.

## 12. ПРОПНАЙ ВЫЙЕСТ

Пайан ҫуракине мěн ҫухлě хатěрленсе ҫитнине сăнамашкăн хире тухатпар. Колхоҫнěксем иртеппелех вěткеленсе кăна ҫўреҫҫě. Пěрин сўсменě справвă мар, теприн урхалăхě ҫук, виҫҫěмěшин ҫўлěкě татăлса кайнă.

Колхос претҫетаттěл хыпалантараҭ кăна.

— Хăвăртрах, хăвăртрах, йулташсем. Вăл вактěвек хатěрсене такҫанах хатěрлесе хумалла пулнă...

Кăнтăрла тěлнелле тин колхоҫнěксем хатěр ҫитерҫěҫ. Вěсем пурте йалсоветҫě умне пухăнҫěҫ.

— Ну, карăмăр! Мěн кěтсе тăратпăр тата?

— Ҫимăр ха, шкул аҫисем тухҫěр. Ку ҫаплă уйава пысăк хаваслахпа тухмалла,—тавăратăп епě.

— Йалав ăҫта, йалав? Парăр кунта кěрлě хăмаҫ, кěрешў йалавě!—кăшкăраҭ 60—70 ҫулхи старик. Сăнран пăхма хай вăл ватă, ěҫлеме те пултараймасҭ темелле, анҫах кěлетки ҫурăмě

тăн-тăн çирĕппипех. Утнă ţух та вăл тăрс-тăрс! пусса кăна çӳрет.

— Аиттăв муţи, сава тухмасан та йуратţĕ. Сирĕн пек ватăсене епир ĕçлемесĕрех тăрантаратпăр,—тет ăна çамрăк колхоçнĕк Йăкăнат.

— Çапла та, ывăлăм, анţах манăн ţунăм ţăţмасť. Урамсем утнă ţухне сирĕн хыççăн ахаљ çӳресе савăнам хăť. Кун пек хаваслă ушкăна ĕмĕрте те курма сунман вĕт епир...—тавăраť лешĕ.

Акă шкул аţисем те карталанса тухрĕç. Умлă хыçлăн, йĕркеллĕн, кайăк хурсем пек ĕретсемпе йурласа пыраççĕ. Вĕсем хыçĕнţен колхоçнĕксем те тапранţĕç.

Йан-йанах к -айтăр
Пионер йурр-и-и!
Тĕнţипех çутаттăр
Совегăн çути...

Йанраť çамрăксен йурри. Хыçалта икĕ çамрăк колхоçнĕк Йăкăнатпа Пеťťа пăлавайккăпа çул çемми йанраса пыраççĕ. Йурă-кĕвĕ майĕпе колхоçнĕксем калаçаççĕ, кулаççĕ. Кун пек пысăк хаваслăха колхоçнĕксем ţăнахах та курманţţĕ кăçалţţен.

Поççолккăри кашни пӳртренех виç-тватă пуç пăхаççĕ темонстратси çине. Хăшĕ ĕненмесĕр тăрăхласа йулаççĕ колхоçнĕксенţен.

— Пăхăр-ха клухвуссем çине: ырхан кĕсрисене пытарма кайаççĕ..

— Кути уш. Хĕрлĕ йалхахсем çакнă.

— Хĕрлĕ йалхах мар хĕрлĕ йĕмтĕп çаксан та çак найансенţен ĕретлĕ ĕçлесси пулас çук.

— Мĕн каласси пур! Сыс та хур вĕсем çине.

— Çăвар тутине сайа ан йар вĕсем çинţен калаçса...

Колхоçнĕксем Вăкăр çырми урлă каççа хире тухрĕç. Поççолккă пуçĕнţен пуçланса вăрман хĕррипе тăсăлса выртаť колхос уйĕ. Кăпка хура тăпра хаљ çеç амаланнă, тĕтĕм пек мăкăрланса пăсланаť.

Епĕ кран йупин тĕмески çине хăпарса тăтăм.

— Йулташсем! Пайан епир хамăр вăйсене тĕрĕслесе пăхатпăр. Ĕмĕрхи ыйхăран вăранса çĕнĕ çул çине тăнă поççолккă хресţенĕ пайан пĕрĕмĕш хут ушкăнлă ĕçе тухрĕ. Çак ушкăна оркаписатсилессишĕн епир питех те нумай кĕрешрĕмĕр. Клас

тăшманĕсем пире пур йенҫен те такăнтарма тăрăшрĕç. Çапах та вĕсем пирĕн ĕрете аркатса йама пултараймарĕç. Епир вăйлă. Пирĕн вăй—пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт, пĕр колектив. Малашнехи кĕрешӳре хамăр ĕретсене татах та çирĕплетер. Утарникле ĕçлесе çуракине ҫи кĕске вăхăтрах туса çитерер. Сывă пултăр полҫшевикла иккĕмĕш çураки! Урра, йулташсем!..

— Урра!

— Ур рра-а!

— Р-р-ра-а а-а!

Сăмахсемпе ӳсĕрĕлсе кайнă колхоçнĕксем çĕлĕкĕсене çӳлелле ывăтса кăшкăраççĕ. Вĕсем пĕр самантрах мана пур йенҫен те пек хупăрласа илсе хăйсем аллисем çинҫе меҫкĕ пек сиктерме пуçларĕç.

Хĕвел кулат. Кăмăллăн пуç тайаççĕ çепĕç çеçкеллĕ ҫеҫексем çурхи йăваш çиле. Ҫĕвĕлтетсе йурласа мухтаççĕ кайăк-кĕшĕксем çурхи хаваслă уйава.

Кĕтмен çĕртенех Лаврентти пиҫҫе тухса тăҫĕ халăх умне.

— Епĕ мушик,—тытăнҫăклă сасăпа пуçларĕ вăл,—Çимйонăв йулташ пек илемлĕ калама пĕлместĕп. А калас килет ман çапах та. Тĕрĕс, мушиксем, кĕрешнĕ. Спаççипă совет влаçне пире кĕрешӳ çулĕ кăтартса панăшăн. Урăх сăмаххăм та çук манан...

— Урра Лаврук пиҫҫене!—кăшкăрса йаҫĕ тахăшĕ кĕтмен çĕртенех.

— Урра!

— Урр-ра-а!

— Р-рра-а-а!

Ун хыçĕнҫен уҫҫиттĕлсем тухса сăмахсем каларĕç. Вĕсем хăйсен сăмахĕсенҫе малашне шкулпа колхос хушшинҫе çирĕп çыхăну тума кирлине кăтартрĕç, шкул колхоса йаланах пулăшса пырĕ тесе сăмах паҫĕç.

Миттĕнк пĕтрĕ. Колхоçнĕксем ĕçе хусканма тытăннăҫҫĕ, анҫах пĕр пионер хăпарса тăҫĕ тĕмеске çине.

— Аттесем, пиҫҫесем, йулташсем!—кăшкăрса йаҫĕ вăл çинçе сасăпа.—Мана сăмах паман пулин те епĕ калатăп хам токлата. Ну, нимĕнрен малтан спаççипă колхос туса панăшан. Пĕр ушкăнра епир те пĕр çемйери пек килĕштерсе ӳсĕпĕр, çĕнĕлле пурăнма вĕренĕпĕр. Иккĕмĕш сатаҫҫă—шкул пахҫине сухаласа парасси. Виççĕмĕш сатаҫҫă... ă... ă...—çамрăк аҫа именсе сăмахран такăнҫĕ. Колхоçнĕксем ахăлтатса кулса йаҫĕç.

— Йш ты пӳрнеккей! Пуç пӳрне пысăккĕш çеç хăй сатаҫ-ҫăсем çинҫен калаçать.

Шкул аҫисем çирĕм-вăтăр сасăпа урралатса хупласа хуҫĕç колхоçнĕксен сассине...

Миттĕнк пĕтнĕ хыççăнах колхоçнĕксем ĕçе тытăнҫĕç. Епир поççолккăна таврăнтамăр.

## 13. КĔТМЕН ХĂНАСЕМ

Кăнтăрла иртсен, хиртен таврăннă хыççăн, епир Тумантейĕв патне çитсе кĕтĕмĕр. Пире, кĕтмен хăнасене, курсассăнах Йакур пĕре хĕрелсе, тепре шуралса кайрĕ. Унтан вăл, хавалланса ӳкнĕ пек пулса, пире хапăллама тытăнҫĕ.

— Ах, хаклă хăнасем!.. Килĕрах-ха, килĕр. Тĕпелерех иртсе ларăр. Килместĕр пĕрре те. Курман-илтмен çынсем пекех пурăнатпăр.

Парăҫкан пек сиккелесе çӳрет Йакур пирĕн умра. Ҫĕкеç пекех ҫ вĕлтетет. Ытти çынсем умĕнҫе нихăçан та кунашкал калаçман тар вăл.

— Есĕ, Йаккур пиҫҫе, ытлашши сăмаххусемпе ан та ҫăрман-ха. Ĕçпе килнĕҫҫĕ епир,—пӳлҫĕ йалсовет претçетатîелĕ.

Йакур ларҫĕ, лапрашки пир кипке çаннипе хăйĕн тарлă çамкине шăлса типĕтрĕ.

— Пулĕ ара, пулĕ. Çаплах ĕнтĕ, ĕççĕрех мар-тăр. Мĕнле ĕçҫĕ-ши тата?—ыйтрĕ вăл.

Сан патăнта пытарса хунă тырă пур терĕç пире.

— Пытарса хунă тырă-а?!—тĕлĕннĕ пек пулса çăварне карса пăрахрĕ Йакур.—Кам пытарнă пуҫ вăл тырра ман патăма? Вăт телей!

— Пытарнă тырра хăвăн ирĕкӳпех кăларса пар. Унсăрăн сана аванах пулмĕ.

— Есир ҫанласах калаçатăрим çак? Манăн нимĕнле тырă та çук пытарни Ĕнер хăвăр тупни выртать ав кĕлетре.

— Çук тетĕн пулсан хамăр шыраса тупатпăр.

— Шырăр, ара, шырăр пушалстă. Кам ухмахĕ тĕллеттерсе йаҫĕ-ха ĕнтĕ сире?

— Уй куçлă, вăрман хăлхаллă, Йакур пиҫҫе.

— Çук, пĕр пĕрҫĕ тырă та çук манăн пытарни.

— Апла пулсан, «Манăн пытарса хунă тырă çук», тесе çыр-

нă потпискă çине алă пусса пар-ха,—сĕнтĕм епĕ Йакура хĕрлĕ кăрантăшпа çырнă хут тагăкки. Потпискă тесессĕнех Йакур сĕтел пуçне ларса шухăша кайрĕ.

— Мĕн вумай шухăшлатăн? Алă пус хăвăртрах!—хыпалантарать Купсов.

— Шухăшлаттарать, аҫа,—ответлерĕ Йакур, ĕнсине хыçса.— Тен ăнсартран сиксе тухĕ те ҫăнахах, вара ху таса çинҫех темĕн курса тăрăн.

— Ҫун таса пулсан етем никçан та хăрамасть.

— Ну, шухăшларăн-и?—ыйгать каллех Купсов. Йакур ура çине сиксе тăҫĕ.

— Купсов йулташ! Тĕрĕссине тĕрĕссипех калатăп: çылăхлă. Ĕнер арăм хĕтĕртнипе kaçхине виçĕ михĕ тырă пытартăм... Çавă пур пытарнă тырă. Унсăр пуçне нимĕн те тупаймăр. Ҫунăм тап-тасах...

— Ăстарах пытартăн ха?

— Ăна хамах каларса парăп.

— Кам илĕртрĕ вара сана?

— Вăл сире мĕн тума кирлĕ?

— Питех те кирлĕ.

— Хăратăп çав...

— Нимĕн те хăраса ан тăр.

— Вăл çапла пулĕ те, çыннисем шăлтах ăнран йараççĕ.

— Нимĕн пытармасăрах каласа пар. Пирĕнтен ниçта та тухас çук вăл сăмах.

— Ĕçĕ çапла пулҫĕ...—пуçларĕ Йакур, вăрăмăн сывласа илсе,—ĕнер пирĕн патран 73 пăт тырă тупрăр. Вăл тырра пĕтĕмпех виçе çине илсе пиҫетлесе илтĕр. Çак хыпара илтсенех Арçук мана йаталласах хăй патне ҫĕнтерҫĕ.

— Куратăн и,—тет,—йепле шăлаççĕ советсем.

— Хамăр ухмах,—тетĕп епĕ ăна хирĕç.

— Ех, тăмана!—тет вăл мана,—мĕншĕн çапла тунине те ăнласа илейместĕн. Хресҫенсене пĕтересшĕн хăтланаççĕ вĕт советсем!

— Пĕтсен пĕтĕпĕр тата. Манăн пурлăхăм нумай мар—тетĕп епĕ.

— Пĕтериҫҫеп малтан пĕр сăтăрккă выçă карăхма не хоҫҫĕш?—тет вăл.

— Çĕн тырăҫҫен ваҫҫи манăн çитет,—тетĕп.

— Ана та шăлса кайĕç-ха, ан васка,—хăратаҫ̌ мана Арçук. Хăрасси ĕнтĕ... ҫ̌ăнахах та хăрама вĕреннĕ епир. Кăмака çинҫ̌е кăмапана хĕртсе выртнă ҫ̌ух тараккан татăлса ÿксен те хăранипе сехрем хăпсах тухаҫ̌ вара. Вăт çапла... Арçук сăмаххисене илтрĕм те хăвăрграх киле ҫ̌упса килтем. Вара кaçхине маткапа иксĕмĕр лупас айĕнҫ̌и тырра пĕтĕмпех пытартăмăр... Ĕнер тепле асăрхамасăрах хăварнă есир вăл тырра...

— Йепле асăрхаман? Йури тивмерĕмĕр епир вăл тырра,— тетĕп епĕ.

— Ну вăт, çавна пытартăм та ĕнтĕ.

— Унта санăн пытармаллăх тырру та çукҫ̌ĕçке?

— Çук та, çапах пĕртакçах пурнас тетпĕрçке. Кирек камăн та хырăм выçаҫ̌ çав.

— Кăларса пар-ха еппин тырруна,—хушрĕ Купсов.

— Çиҫ̌ҫ̌ас, халех. Кунтахҫ̌ĕ-ха вăл...,—терĕ те Йакур урай хăмисене хăпăтма тытăнҫ̌ĕ. Икĕ хăма сирсе пăрахсассăнах тăпрас çинҫ̌е çĕнĕ улăм пĕрҫ̌исем курăнса кайрĕç. Йакур кĕреçе илсе кÿртсе хăвăрт-хăвăрт ҫ̌авса кăларҫ̌ĕ тăпра айĕнҫ̌и михĕсене.

— Ну тепперҫ̌ă шырăр. Потпискă мар, пуçăма татса пама пултаратăп халĕ,—терĕ вăл, шăтăка тăпра йарса питĕрсе.

— Çуках-и вара?

— Шырăр. Хăҫ̌ пĕтĕм çĕрне тавăрса силлĕр. Пытарнă тырă пĕр пĕрҫ̌ĕ тупсан та мап сăмсам йытă кутне пултăр!—ответлерĕ Йакур хайуллăн.

— Санăн, Йакур пиҫ̌ҫ̌е, куншăн вараланма та кирлĕ пулман. Хăвна ху улталатăн кăна.

— Ухмах пуçа мĕн тăвăп тетĕн ĕнтĕ. Çын сăмахне итлемелле марҫ̌ҫ̌ĕ,—ÿкĕнет Йакур.

— Кулаксен сăмахне итлесен темĕн те курăн. Вĕсем йури сана лапăртгасшăн кăна тăрăшаççĕ. Санăн çул кулаксемпе мар, колхоспа пулмалла. Так ахалех турткаланса тăратăн.

— Колхосĕнҫ̌ен те вĕсен сăмахĕпе кайалла тухрăм. Халĕ ĕнтĕ малашне ҫ̌ейийерех пулăп, хам пуçăмпа шухăшласа пурăнма тытăнăп.

Йакурăн мĕн пур тыррине шута илтĕмĕр. Çĕнĕ тырă ĕлкĕриҫ̌ҫ̌ен çемйи ваҫ̌ҫ̌и те, выҫ̌ăхĕсем ваҫ̌ҫ̌и те уйарса патăмăр. Ытлашши тыррине Йакур пиҫ̌ҫ̌е хăй ирĕкĕпех патшалăха леçсе пама килĕшрĕ.

## 14. КИРЕМЕТ

Кăвак шуçăмлах сапан тимĕрĕсемпе ҫăнкăртаттарса тухса кайрĕç колхоçнĕксем хире, çуракине. Мĕн пурĕ виçĕ прикатă ĕçлет: сухалакансем, сӳрелекеннисем тата акакансем. Пĕтĕм ĕçсене малтанах йĕркелесе çитернĕ. Колхоçнĕксем кашнийех хăй мĕн тумаллисене тĕплĕн пĕлсе тăраççĕ. Полевот прикатăсене уҫҫасткăсем тĕллеттерсе парсанах ĕç хута кайрĕ.

Шăхăрса кăна çӳреççĕ колхоçнĕксем сапансем хыççăн. Сухаланă çĕрне çавăнтах акса сӳрелесех пыраççĕ.

Колхоçнĕксен ĕçри хавасланĕ çавтери пысăк. Пайан вĕсен икĕĕлми вăйхăватне, паттарлăхне нимĕнле вăй та тытса ҫараймĕ!

— Н но-о! Йăран хĕррипе-е!—илтĕнкелет хушăран сасă.

— Ей, малти! Тимлерех уттар лашуна. Çĕр йăтăнса анасран ан хăра!

— Е-е-ей, веçелей!

Колхос лашисем пуçĕсене ухса кăна пыраççĕ. Акана тухас умĕн вĕсене питĕ лайăх тăрантарнă.

Кăнтăрла тĕлĕнҫе сухалакансенҫен хăшĕ-пĕрисем ӳрĕк-сӳрĕк ĕçленине асăрхарĕ прикатир.

— Есир мĕн урăрсене аран сĕтĕретĕр? Айăр, тимлĕр! Тайош темппă!—васкатаť вăл.

— Ытла шăрăхçке... Кăштах ларса канар-ха,—тавăраççĕ лешсем найанăн.

— Кăнтăр кӳлĕмре пурте канатпăр. Унҫҫен пурин те ĕçлемелле. Халĕ çŤелшҫинă, ĕçлени харама кайаť тесе шутлама çук.

— Вĕсене уйрăм уҫҫасткă памалла. Епир вată пуçпах çамрăксенҫен ытларах ĕçлетпĕр. ÇŤелшҫинă пулҫĕ-и вара ку? Пирĕн хӳтлĕхпе йарăнса çӳреççĕ вĕсем,—ӳпкелешет Аиттăв муҫи.

— Тĕрĕс!—килĕшеççĕ ытти колхоçнĕксем те.—Кăнтăрла иртсенех çамрăксемпе ăмăртса ĕçлеме тытăнатпăр. Кам нормăна маларах тата ытлашшипех тултарĕ... Тавай штолĕ? Кам—кама!

Хĕрӳллĕн тимлесе ĕçлесе пынă çĕртех, вар хĕррин҅е ĕçлекен прикатăран пĕри сасартăк пысăк сасăпа кăшкăрса йаҫĕ.

— Кире-ме-ет! Ки-реме-е-е-ет!

Колхоçнĕксем хăлхисене тăратрĕç.

Сасă каллех илтĕнҫĕ:

— Йулташсем! Киремет тухрĕ, кире-ме-ет!

— Мĕн ҫăва киремеҫĕ-ши тата?—терĕмĕр те епир вар хĕрринелле ҫупрăмăр.

— Аҫта киремеҫĕ?

— Акă, ҫĕр айне ҫӳлмекпе лартнă.

Пĕр самантрах колхоҫнĕксем ҫӳлмеке ҫавса кăларҫĕҫ. Ҫӳлмек ăшне темĕн те пĕр ҫыхса тултарнă: икĕ ҫăмарта, хăмла, салат, хĕрес, кивĕ тутăрпа кĕл ҫĕркесе ҫикнĕ, тата ытти йăх-йахсем те темĕн ҫухлех. «Ҫак йăх-йах колхоҫнĕксен пуҫне пултăр» ҫырнă тутри ҫине тикĕтпе.

— Охо-хо! Мĕнпе ҫийесшĕн вĕсем пирĕн пуҫа... Киреметпе тухатса лартасшăн пулнă колхоса!

— Охо-хо-хо-о!

— Ха-ха-ха!

— Их хи-хи и!

— Тавай, Йăкăнашкă, ҫап та ҫĕмĕр киремет пуҫне. Мĕн пăхса тăратăн.

— Пĕрҫĕн-пĕрҫĕн сирпĕнтер!

— Вута пăрахса ҫунтарса йарас.

Йăкăнат ҫалăшшăн шуса тухрĕ те халăх умне сапан хырмалли кулакпа ррас! анҫах сулса йаҫĕ киремет урлă. Тăм ҫӳлмек пĕрҫĕн-пĕрҫĕн арканса перхĕнҫĕ.

Аиттăв муҫи киремете ҫунтарса йама кăваҭ хуҫĕ. Пĕр аҫаллă хĕрарăм киремет тутрине алла тытса пăхрĕ:

— Тутри аванах мĕн. Шеллемен те мантарăн.

— Колхос пуҫне ҫиме тутăр мар темĕн те шеллес ҫук-ха вĕсем. Мĕн тыткаласа тăратăн, инке, ҫав йăх-йаха? Вăрхăнтар хăвăртрах вута!—терĕ Аиттăв муҫи. Аҫаллă хĕрарăм тутăра ҫăмартакаларĕ те шатăртатса ҫунакан вут ҫине пăрахрĕ. Хĕрӳллĕ ҫулăмăн хĕрлĕ ҫĕлхисем пĕр самантрах ҫулласа ирĕлтерсе йаҫĕҫ киремет йĕрĕхĕсене.

---

Утсене касхи кӳлĕме тăварнă ҫух колхоҫнĕксем патне Тути арăв пырса тăҫĕ. Вăл хаҫ кăна илсе килнĕ ҫейăлккăна тыткаласа пăхкаларĕ те пуҫне ҫĕклерĕ.

— Пăхатăп та, хаҫхи машшинсем ĕлĕкхин пек мар вара. Ĕлĕкхисем кунашкал марҫҫĕ.

— Мĕнлеҫҫĕ тата? Ĕлĕкхисене ылттăнланăҫҫĕ-им?—ыйтрĕ Ирсыйĕв тăрăхласа.

— Йаснă хаҫхи машшинсем ĕлĕкхине ҫитеймеҫҫĕ... Пирĕн

Совет тăваймасť вĕсене. Тватă йуплĕ сенкĕсене те Франтсинҫен кўрессĕ пулаť те...

— Сенĕксене кăна мар, йăвăç кĕрепесене те Франтсинҫенех кўрессĕ,—каллех сăмах тĕртрĕ Ирсыйĕв.—Кăçал каллех хамăр йалсоветҫĕпе поççолккă ваҫҫи икçĕр кĕрепле йама сайавккă патăмăр.

Колхоçнĕксем ниçтан тўссе тăраймасăр ахăлтатса кулса йаҫĕç. Тутиарăв нимĕн сăмах калама аптăра нипе сăмсине усса айăккалла пăрăвҫĕ.

— Ех, намăссăрсем! Колхос килĕшмест пулаť те ĕнтĕ вĕсене вара колхосăн йапалисем те наҫар иккен,—тарăхса ăсатрĕ Тутиарăва колхос претçетаттĕлĕ.

— Кашни утасрах такăнтарасшăн кăна çурессĕ.

— Ытла ансат пулĕҫҫĕ Ҫавсана çыртасҫĕ те, анҫах инçерех,—тавăрҫĕ Аиттăв муҫи. Кам кама такăнтарĕ-ха, курăпăр унта.

Ҫăнахах та Тутиарăвăн колх са такăнтарас ĕмĕҫĕ çитмерĕ. Тепĕр куннех ăна ППУ-на тытса кайрĕç. Епĕ çырнă çекретнăй паккет хăйĕн ĕçне турĕ.

———

Пурте пухăнса çитсен пайан тунă ĕççене пĕтĕçтерсе кĕнеке çине çырма пуçларăмăр. 1-мĕш прикатă—4 лашапа 1,85 ка, 2-мĕшĕ—3 лашапа 1,28 ка 3-мĕш прикатă—3 лашапа 0,95 ка ĕçленĕ.

— Нуккă, прикатир, каласа пар-ха, кам кама пăрăнтараť: стариксем çамрăксене-и, йе çамрăккисем стариксене парăнтараççĕ?

— Паллах стариксем! Ăçтан çитҫĕр çамрăксем стариксене.

— Хăш прикатă ытларах ĕçленĕ?

— Аиттăв муҫи прикати 1,85 ка сухаланă.

— Ай та Аит! Вăт есĕ ăна 60 çулти старик тесе тăр. Пыр та калаç унпала. 20 çулхисене оҫко параť!

— Çамрăксем мĕн вĕсем? Симĕс!—тăрăхлаççĕ стариксем.

— Амăрту-и ку? Ăмăрту та мар, сорнăвани те мар. Ăмăртса ĕçлес тĕк кашнин утарник пулас пулаť,—мăкăртатаť хăйне хăй Аиттăв старик.

Çамрăксем çавтери тарăхса çитрĕç нулмалла. Пеťта пуринҫен мала тухрĕ те ҫышкисене ҫăмăртарĕ:

— Ну тавай еппин, Аит муҫи, кĕрешсе пăхар. Кам кама çĕнтерĕ?

— Не-ет ăшҫĕ! Есĕ малтан ĕçпе çийеле тух. Вара кĕрешме

те йурать,—ахăлтатса йаҫĕç колхоçнĕксем Пеťťа айванлăхĕнҫен.

— Латнă. Пĕр кун ĕçленипех нимĕн те паллă мар-ха вăл. Малашне курăпăр унта,—тавăрҫĕ Пеťťа, нимĕн калама аптăраса.

— Курăпăр!—тавăрҫĕç колхоçнĕксем те.

## 15. МАЙ УЙАВĔ

Пайан—ахăлтатса кулса тăракан май уйăхин 1-мĕш кунĕ, пĕтĕм тĕнҫери пролеттариатăн револютсийле аслă уйавĕ. Колхоçнĕксем кăнтăрла тĕлĕнҫе хиртех миттĕнка пухăнҫĕç. Райкомран йыхрав килнĕ, май уйавин колхосла йыхравĕ. Сотсиалисăмлă ăмăртупа утарниҫҫĕствăна сарса йарасси, çуракине кĕске срукрах ирттересси, ҫухăнпа вăтам уйрăм хуçалăхсене пурне те колхоса кӳртсе района талкăшĕпех колективлассипе çинҫен çырнă çав йыхравра. Епĕ ăна миттĕнк умĕнҫе вуласа парăм.

— Ну, йулташсем, мĕн калăпăр партти йыхравĕ пирки? Сăмах сирĕнте!—ыйтрăм епĕ вуласа пĕтерсен.

Халăх умне Пеťťа тухса тăҫĕ.

— Мĕн каласси пур... Епир хамăр калассине ĕçпе кăтартрăмăр. Малтанах ĕçе хăнăхса çитеймен пирки пирĕн, çамрăксен прикати нормăсене те тултараймастҫĕ, халĕ пыр та калаç пирĕнпе. Ĕнер епир виçĕ лашапа 1,5 сухаларăмăр. Кунашкалах тимлесе ĕçлесен епир çуракине пур колхоссенҫен те малтан туса пĕтерме пултаратпăр...

— Тĕрĕс, Пеťťа, тĕрĕс!—сиксе тухрĕ колхос претçетаттĕлĕ.— Ĕçĕн хăвăртлăхĕсене тата ытларах ӳстерме кирлĕ. Пурин те пирĕн утарниксен ĕретне хутшăнмалла.

— Пайантан пуçласа епĕ утарникле ĕçлеме пулатăп. Ыттисене те хам пекех тума ҫĕнетĕп,—йевитлерĕ Аиттăв муҫи, халăх умне тухса.

— Епĕ те утарник!

— Епĕ те!..

— Çырăр мана та!

— Сывă пултăр утарниҫҫĕствă!..

— Тайош ăмăрту!

— Колхоçнĕк йулташсем!—пӳлет претçетаттĕл халăхăн хумханса тăракан сассине.—Пирĕн сатаҫ ытти колхоçнĕксене те хамăр примера кăтартса парасси. Çак шутпа епĕ Уçтимйелĕнҫи «Молăттăв» колхосне ăмăртăва ҫĕнме сĕнетĕп.

— Лайăх шухăш!
— Пайанах ђĕнетпĕр...
— Пеťťа, çыр токăвăр!
— Парăр Пеťťана хут!
— Парăр кăранташ!..
— Ђимĕр-ха, йулташсем, ан шавлăр!—каллех пўлет претçетаттĕл.—Токăвăр пеккине епĕ хамах çырса хатĕрлерĕм. Ăна вуласа çирĕплетесси кăна йулаť.
— Аťа, вуласа пар еппин.
Претçетаттĕл вулаť:

## „МОЛĂТТĂВ“ КОЛХОС ЂЛЕНĔСЕНЕ

### „Краснофлоттĕс“ колхосăн йыхравĕ

### Хаклă йулташсем!

Колхосла уй-хирĕн утарникĕсем! Пирĕн çулпуçăмăр комуниссен парттийĕпе унăн Ленинла Тĕпкомĕ тĕрĕс йертсе пынипе кăçал епир аслă ĕçсен пилĕк çуллăх планĕн татăклă виççĕмĕш çулне кĕтемĕр. Рапођђи класпа ĕçхресђенĕсем кунран кунах çĕнĕ çĕнтерӳсем тăваççĕ. Епир, уй-хир утарникĕсем, хамăр хуçалăха хăпартмалли, кулак тыткăнĕнђен хăтăлмалли пĕртен-пĕр тĕрĕс çул—ушкăнлă хуçалăх çулĕ пулса тăнине аванах ăнланса çитсе çав çул çине çирĕппĕн тухса тăтăмăр. Патраксемпе ђухăнсем тата вăтам хресђенсем клас пулса тăракан кулаксене хуçалăха колективланипе тĕп туса пыраççĕ.

Хайĕн вилĕмĕ умне çитсе тĕртĕннĕ клас тăшманĕ пĕтĕмпе урса кайсах пире хирĕç кĕрешме пуçларĕ. Кулаксемпе поткулађнĕксем тата вĕсен йуррине йурлакансем кашни утăмрах пире, колхоçнĕксене, такăнтарма тăрăшаççĕ, колхос çинђен тĕрлĕрен елеклĕ суйа сăмахсем сарса, уйрăмăн пурăнакан ђухăнпа вăтам хресђенсене хăйсем майлă çавăрма пикенеççĕ.

Анђах епир, колхоса пĕрлешнĕ ђухăнсемпе вăтамсем, партти кăтартса панă çул çинђе çирĕп, паттăрăн тăратпăр. Пирĕн ĕретсене клас тăшманĕ нихăçан та аркатайас çук. Епир вăйлă! Пирĕн вăй— пĕрлешӳре. Клас

тăшманĕ пуçне çĕкленине хирĕç хамăр вăйсене тата ытларах ӳстернипе ответлер. Çурхи ака планне ытлашшипех тултарар. Утарникле ĕçлесе поļшевикла иккĕмĕш çуракине кĕске вăхăтрах туса иртерер. Сотсиалисăмлă ăмăртупа утарниţţĕствă йалавĕсене çӳлерех çĕклер.

Пĕтĕм тĕнţери пролеттариатăн революцисиллĕ аслă уйавĕ—1-мĕш май йаţĕпе, епир «Краснофлоттĕс» колхос ţленĕсем пурте утарниксен ĕретне хутшăнатпăр. Пайавтан пуçласа мĕн çураки пĕтиţţенех утарникле ĕçлеме пулатпăр. Ĕç нормисене уйрăм хуçалăхрисенţен пĕрре çурă хут ӳстерме, çураки планне ытлашшипех тултарма, пĕрţĕслĕ тырăсене майăн 5-мĕшţен акса пĕтерме, майăн 10-мĕшţен уйрăм хуçалăхсенţен 40% йахăн колхоса хутшăнтарма епир сирĕнпе ăмăртăва тухатпăр. Сотсиалисăмлă ăмăртупа утарникле ĕçлес майсене пире Ленин йулташ парса хăварнă.

Ĕ ĕн сотсиалисăмла майĕсем—ăмăртупа утарниţţĕствă сывă пулţţăр!

Поļшевикле иккĕмĕш çуракин çĕнтерĕвĕсене пĕтĕмпех алла илессишĕн кĕрешер!

«Краснофлоттĕс» колхос ţленĕсем.

— Йурăт-и, йулташсем, çакнашкал çырсан?—ыйтрĕ претçетаттĕл вулама ţаранса.

— Питĕ аван.

— Мĕн кирлĕ тата?

— Хушмаллисене кайран та хушăпăр,—ответлерĕ претçетаттĕл.

Каçхине ĕçрен тавăрăнсан ăмăрту токăвăрне çĕнĕрен çырţĕç. Унта колхоçнĕксен сĕнĕвĕсене татах та кӳртрĕмĕр. Çав каçах колхоçнĕксенţен икĕ уполномоţţĕннăй уйăрса токăвăра йышăнтарма Уçтимйелне йагăмăр.

## 16. РАППĂРТ

Парттин Ҫаллăпуç райкомне, укерҫĕкĕ—«Молăттăв» колхос ҫленĕсене.

Ваççиҫйĕвкка поççолккинҫи (Ҫаллă-Пуç р.) «Краспофлотĕс» колхос майăн 6 мĕшĕнҫе çураки планне пĕтĕмпех тултарҫĕ.

Епир, ҫухăнсемпе вăтам хресҫенсем, ĕмĕртенхи вушаллă, хĕнхурлă пурнăçа пăрахса ушкăнлă хуçалăха пĕрлешнипе хамăр ĕçĕн тухăçлăхне пихăçанхинҫен те ытларах ўстертĕмĕр. 11 лашапа, 2 çейăлккăпа, 2 сўрепе ĕçлесе епир апрелĕн 23 мĕшĕнҫен пуçласа майăн 6 мĕшĕҫҫен пĕрҫĕллĕ тырăсем 60,7 ка, техниҫҫĕски куҫттурăсем 1 ка акрăмăр. Çакă ĕç—пирĕн колхоçнĕксен пĕрĕмĕш çĕнтерĕвĕ. Вăл çĕнтерĕве алла илессишĕн епир паттăрăн кĕрешрĕмĕр, майăн 2 мĕшĕнҫен пуçласа пурте утарникле ĕçлерĕмĕр.

Клас тăшманĕсем—кулаксемпе вĕсен акĕнҫĕсем пирĕн ĕçе темĕн пек ҫăрмантарасшăн тăрăшрĕç. Вĕсем пирĕн колхос çинҫен темĕн тĕрлĕ суйа сăмахсем сарса çўрерĕç. Çапах та вĕсем пирĕн ĕрете аркатаймарĕç. Епир вăйлă! Пирĕн вăй—пĕрлешўре, пирĕн вăй—комуниссен парттийĕ тĕрĕс йертсе пынинҫе, парттин политтĕкне нимĕн пăркаланмасăр пурнăçа кўртсе пынинҫе.

Хамăр ĕçри ўсĕмсене малашне тата ытларах çирĕплетме пултпăр. Утарникле ĕçлесе, сотсиалисăмлă ăмăрту майĕпе усă курса хамăр колхос происвотствине çирĕплетессе шангаратпăр. Колхос тулашĕнҫи уйрăм хуçалăхлă ҫухăнпа вăтам хресҫенсене колхоса кўртессишĕн паттăрăн кĕрешме сăмах тытатпăр.

Ĕçĕн сотсиалисăмлă майĕсем—утарниҫҫĕствăпа ăмăрту сывă пулҫҫĕр!

Пире тĕрĕс çулпа йертсе пыракан комуниссен парттийĕ сывă пултăр!

Поҫшевикла иккĕмĕш çуракин çĕнтерĕвĕсем сывă пулҫҫĕр!

Колхос пуçлăхĕ—ÇЕМЕНĂВ Л.

Правлени ҫленĕ—Й. КУПСОВ.

Март—май,
1931 ç.
Ҫаллăпуç—Самар.

# ТУПКĂҪИ.

Стр.
1. Кĕрешӳ пуҫламăшĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 4
2. «Кăларăр мана колхосран» . . . . . . . . . . . 5
3. Инкесем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 10
4. Шавлă пуху . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
5. Ҫурҫĕр иртсен. . . . . . . . . . . . . . . . . . 16
6. Тăрлавсăр сыпăк . . . . . . . . . . . . . . . . 18
7. Кам ҫырнă ку хута? . . . . . . . . . . . . . . 22
8. Районри хаҫат ретаксинҫе . . . . . . . . . 25
9. Епир мĕншĕн ӳсейместпĕр? . . . . . . . . . 28
10. Хĕвел анас умĕн . . . . . . . . . . . . . . . 31
11. Шуҫăм килнĕ ҫух . . . . . . . . . . . . . . . 33
12. Пропнăй выйĕст . . . . . . . . . . . . . . . . 35
13. Кĕтмен хăнасем . . . . . . . . . . . . . . . . 38
14. Киремет . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 41
15. Май уйавĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 44
16. Раппăрт . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 47

Репактор ВИКТОРОВ. Техред. МИХАЙЛОВ.
Крайлит Г—549. СВ ОГИЗ № 601. Инп. худ. Тираж 3000. Форм. 72×110 1½ п. л. кол. зн. в. 1 п. л. 52800. Сдано в набор 19/I. Подписано к печати 15/II—32 г. Типография № 1 имени Мяги Средволполиграфтреста в Самаре. Заказ № 166.

Цена 40 коп. Хакĕ 40 пус.

ТУКТАШ И. С.

# ПЕРВАЯ ПОБЕДА

(на чувашском языке)

ОГИЗ — 1932

Средневолжское краевое государственное издательство